www.tavanen.ru

# Тăван Ен

плюс Причебоксарье

№45 • (10607-10608) • НОЯБРĔН 16-МĔШĔ • 2017 • КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ



Балерина пулас тенĕ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

Ĕçлеместĕн – хăв тӳле!
ÇАВРА СĔТЕЛ → 3

Наркотик серепинче ачасем те
ТĔЛ ПУЛУ → 5

«Пĕр алăллă» хурах сăтăрĕ
ЯВАПЛĂХ → 5

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН



П. Иванов сăн ӳкерчĕкĕсем

# Кăтартусенчен чакмасăр малалла ăнтăлса

**Ноябрĕн 10-мĕшĕнче район Шупашкарти ача-пăча тата çамрăксен пултарулăх керменĕнче ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен кунне тата муниципалитет йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнине паллă турĕ. Шупашкаръенсене саламлама Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та çитрĕ.**

### Кавăнран – «сысна ферми»

Савăнăçлă мероприятие çавăн пекех Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ – бюджет, финанс тата налук комитечĕн председателĕ Альбина Егорова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет председателĕ Вячеслав Рафинов, сывлăх сыхлав министрĕ Владимир Викторов, Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ Татьяна Рябинина хутшăнчĕç. Уяв хăнисене Кӳкеçри «Телей» халăх фольклор ансамблĕ ташă-юрăпа, çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕ. Ял тăрăхĕсен тата муниципалитет территорийĕнче апат-çимĕç тата тавар туса кăларакан промышленноç предприятийĕсен кунта йĕркеленĕ куравĕпе, суту-илĕвĕпе кашниех паллашма пултарчĕ. Ял тăрăхĕсем курава Чăваш Республикинчи Ашшĕпе Амăшĕн тата Раççейри экологи çулталăкĕсене халалласа йĕркеленине палăртмалла. «Лаши çерем çинче çӳрет, урапине вара кунта кĕртрĕмĕр», – тет Вăрман-Çĕктер ял тăрăх пуçлăхĕ Олег Ермаков çак тăрăхри çут çанталăк пуянлăхĕсемпе авăнса тăракан тулли лав çинчи апат-çимĕçпе паллаштарнă май. Кунта Атăлтан тытса типĕтнĕ пысăк пулă та, вăрмантан пуçтарнă шурă кăмпа та, пахча çимĕçрен ăсталанă тĕрлĕ композици – кавăнтан «тимĕр шапа», «сысна ферми», килти винограднран «чĕрĕпсем» – те пур.

Кăшавăш ял тăрăхĕн стендне те экологи темине тĕпе хурса йĕркеленĕ. Çӳп-çапран – чей хутаçĕсенчен шăккалат, хĕвел çаврăнăш тĕркисенчен – çĕленĕ капăр тум тăхăннă вырăнти библиотекаре асăрхамасăр иртеймĕн. Çӳп-çапа иккĕмĕш пурнăç парнелекенскер кивĕ хаçат-журналтан ăсталанă çи-пуçĕпе те мухтанать. Тĕрлĕ наци тумне тăхăнтартнă пуканесем вара Ашшĕ тата Амăшĕн çултакĕпе çыхăннăччĕ. Кăрмăшри Регина Чернова шкул ачисене сцена çине пултарулăх номерĕпе тухмашкăн тухьясем илемлетсе парать. Алă хăнăхиччен кăна, кайран ĕçĕ хăех кал-кал пулса пынине ĕнентерет ăста.

Сĕньял-Покровски ял тăрăхĕн нумаях пулмасть кун çути курнă «Край родной Синьял-Покровский» кĕнеки Михаил Васильевич аллине те лекрĕ.

→ 9

## • РЕСПУБЛИКĂРА

**«ТРАКТОР ЗАВОЧĔСЕМ» КОНЦЕРНĂН ЧĂВАШ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЕ УКÇАТЕНКĔПЕ ÇЫХĂННĂ ЙЫВĂР ЛАРУТĂРУРАН КĂЛАРАС ЕНĔПЕ** ĕçсем малалла пыраççĕ. Иртнĕ эрнере «Ростех» патшалăх корпорацийĕн тата Внешэкономбанк представителĕсем республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă. Шупашкарти концерн предприятийĕсем малашне «Ростех» çемйине кĕреççĕ. Патшалăх корпорацийĕн индустри директорĕпе Сергей Абрамовпа иртнĕ калаçу тĕпрен илсен çакăн тавра йĕркеленнĕ. «Промтракторпа» Агрегат завочĕн коллективĕсемпе тĕл пулнă хыççăн çакă тĕрĕс утăм пулни пирки корпораци директорĕ пĕрре те иккĕленменнине пĕлтернĕ. Предприятисенчи социаллă-экономика лару-тăрăвне хак паракан ĕç ушкăнĕ кунта вăй хуракансен професси ăсталăхĕн çӳллĕ шайне тата техника хăвачĕ пысăккине палăртнă.

Михаил Игнатьев журналистсене çак шухăша федераци шайĕнче йышăннине пĕлтернĕ. «Предприятисенчи аталану япăх мар, пирĕн тĕллев – заказсен шутне ӳстересси», – тенĕ вăл.

Юлашки çулта «Промтрактор» производство хăватне виçĕ хут ӳстерме пултарчĕ, анчах та завода пур хăватпа ĕçлеттерме çакă çителĕксĕр. Тĕп кредитор – Внешэкономбанк – чăваш предприятийĕсене 5,5 млд тенкĕ кредитпа тивĕçтернĕ. Çак укçан пысăк пайĕ ĕç укçине тӳлеме кайнă. Халĕ вара предприятие йывăрлăхран кăларас пĕрлехи программа шайĕнче тата 1,5 млрд тенкĕ уйăраççĕ. ■

**2013 ÇУЛТА ЧР ПУÇЛĂХĔН ХУШĂВĔПЕ ÇИРĔПЛЕТНĔ «ÇУЛ-ЙĔР КАРТТИПЕ» ПĂХНĂ МЕРОПРИЯТИСЕН ПЛАНĔПЕ КИЛĔШӲЛЛĔН** бюджет тытăмĕнче, культура учрежденийĕсенче, вăй хуракансен ĕç укçи 2018 çул тĕлне республикăри вăтам ĕç укçинчен кая мар пулĕ. Кăçалах ăна вăтам кăтартуран 90% таран ӳстерĕç. Асăннă тĕллевпе патшалăх культура учрежденийĕсем валли 98,2 млн тенкĕ, муниципаллă учрежденисем валли 98,1 млн тенкĕ пăхса хунă. Ĕç укçине тапхăрăн ӳстерме ăна çитес çулсене валли йĕркеленĕ чухне те шута илĕç.

Раççей Президенчĕ 2012 çулхи май уйăхĕнче алă пуснă «Патшалăхăн социаллă политикин мероприятийĕсене пурнăçласси çинчен» указ çапла майпа регионта туллин пурнăçланĕ. ■

**ПАЯНХИ КУН РЕГИОН СТРАТЕГИ АТАЛАНĂВĔШĔН** паха 11 енпе пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçлать, пур приоритетлă проекта та патшалăх программине кĕртнĕ. Чи пысăк проектсен шутĕнче – «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» проект, «Шупашкар агломерацийĕ» транспорт инфраструктурине аталантармалли комплекслă программа» валли 2018 çулта 1349,7 млн тенкĕ (2017 çулта палăртнă виçерен 17% нумайрах), уйăрнă «Шкул ачисем валли хальхи йышши вĕрентӳ хутлăхĕ йĕркелессишĕн» – 1152,8 млн тенкĕ (ӳсĕм – 38,6%). ■

2018/ I çур çуллăх çырăнтару хакĕсем

Çырăнтару индексĕ: 54820 П6022

**ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ** – 377 82 пус тенкĕ
Республикăри пур районта та çырăнтараççĕ

**АЛЬТЕРНАТИВА ÇЫРĂНТАРĂВĔ** – 260 тенкĕ
Редакцире илсе тăмалла
**ЭЛЕКТРОНЛĂ ÇЫРĂНТАРУ**

**ИШЛЕЙ РАЙПОВĔН ЛАВККИСЕНЧЕ** – 300 тенкĕ
Шупашкар районĕнче вырнаçнă Ишлей райповĕн лавккисенче çырăнса илсе тăмалла
**«ЧĂВАШПИЧЕТ» КИОСКĔСЕНЧЕ**



Святослав ЕГОРОВ, Апаш

## ПАРНЕ ВАЛЕÇМЕ ВĂХĂТ ÇИТЕТ!

**Юратнă хаçата 2018 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче илсе тăма çырăнтару тапхăрĕ пуçланчĕ. Харсăр вулакансем лотерейăна хутшăнма редакцие квитанцисемпе килме пуçларĕç те ĕнтĕ. Вĕсене электрон почтăпа та ярса пама юрать: tavan-en21@yandex.ru, вайбер мобильлĕ приложенипе те 89656874459. Ытти çул пĕр машина вутă, телевизор, мультиварка, сысна вылятарнă пулсан ку хутĕнче**

**ĂРАТЛĂ ТАКА ХУÇИНЕ ПАЛĂРТАТПĂР!**



**Хăвăр ял хыпарĕсене пире те пĕлтерĕр! Чи хастаррисене парнепе хавхалантаратпăр!**

**89656874459**



**Альбина ЕГОРОВА,**
ЧР Патшалăх канашĕн вице-спикерĕ, информаци ушкăнĕн ертӳçи:

– Черетлĕ пĕрлĕхлĕ информаци кунĕнче халăхран çул-йĕр юсавĕпе, шыв парса тăрассипе, васкавлă медицина пулăшăвĕ тĕлĕшĕпе ыйтусем пулчĕç. Çынсем васкавлă медицина бригадине вăрах вăхăт кĕтме тивнишĕн ӳпкелешеççĕ. Хăш-чухне çур сехет ытла та иртет. Çак ыйтăва эпир ЧР сывлăх сыхлав министерствине çитеретпĕр.

Çулсем тăвассипе çынсене Шупашкар районĕ «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» программăна кĕни çинчен ăнлантартăмăр. Çулсене юсаса çĕнетни ял-салана аталантарма та май парать. Юртукассинче çынсем пысăк тиевлĕ машинăсем çулсене пăснишĕн ӳпкелешрĕç. Вĕсен сăмахĕсем тăрăх, машинăсем вырăнти лавкка хуçин. Çак ыйту вырăнти пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа ăна ял тăрăх пуçлăхĕн татса памалла. Паянхи тĕл пулусенче йышăннă ыйтусене яваплă службăсем таран çитерĕпĕр, граждансем тивĕçлĕ хурав илĕç.

РЕСПУБЛИКĂРА

**МИНИСТЕРСТВĂСЕМПЕ РАЙОН-ХУЛА АДМИНИСТРАЦИЙĔСЕН УМНЕ «СĂРĂ» СХЕМĂПА ĔÇ УКÇИ** тӳлекен тата налог хывасран пăрăнакан предприятисене тупса палăртас тĕллевпе çанă тавăрса ĕçлеме çирĕп тĕллев лартнă. Халăха ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшĕпе пурнăçланă ĕçсем эрне пуçламăшĕнче Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территорисенчи органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ирттернĕ канашлура тĕп тема пулнă. «Пурин те уççăн, тĕрĕс ĕçлемелле», – тенĕ Пуçлăх. Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшĕнчи патшалăх программин мероприятийĕсем валли 2017 çулта бюджетра 386,9 млн тенкĕ пăхнă. Вĕсене 72,8 пин çын хутшăннă.

**ЧР ĔÇ ТАТА СОЦИАЛЛĂ ХӲТЛĔХ МИНИСТЕРСТВИН ИНФОРМАЦИЙĔПЕ**, çулталăк пуçланнăранпа 37,8 пин çынна ĕç вырăнĕ тупма пулăшнă. 2096 ĕççĕр çын хушма професси пĕлĕвĕ илме пултарнă. Регистрациленнĕ ĕççĕрлĕх 5075-рен 3934 çын таран чакнă. Унăн шайĕ 4,7%.

Эрнесерен ирттерекен сăнав тулли ĕç кунĕпе паян 9 предприятире 1500 çын тăрăшнине кăтартса парать. Çулталăк пуçланнă тĕле вĕсен йышĕ 3 пин пулнă.

# Тĕл пулусем тухăçлă иртеççĕ

• ПĔРЛĔХЛĔ ИНФОРМАЦИ КУНĔ

**Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Енре, çав шутра пирĕн районта та, Пĕрлĕхлĕ информаци кунĕ иртрĕ. Ĕçлев ушкăнĕсем Тутаркасси, Атайкасси, Кӳкеç тата Кăшавăш ял тăрăхĕсене çитсе халăхпа тĕл пулчĕç. Çынсене кун йĕркине кĕртнĕ тăватă ыйтупа – демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси, наркоманипе кĕрешесси, гражданасене тӳлевсĕр юридици, ачасене право пулăшăвĕ парасси, кĕрхи-хĕллехи тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси – паллаштарчĕç.**



Ĕçлев ушкăнĕ. Атайкасс ял тăрăхĕнче

## Ырă улшăнусем

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн вице-спикерĕ Альбина Егорова ертсе пынă ушкăн Юртукасси ял çыннисемпе тĕл пулчĕ. Альбина Егоровна висĕм кун Правительство Çурчĕн Пысăк залĕнче Чăваш Республикин 2018 çулхи бюджечĕн проекчĕ, 2019 тата 2020 çулсенчи планри тапхăрĕ тĕлĕшĕпе халăх итлевĕсем иртни çинчен пĕлтерчĕ.

Альбина Егоровна 2018 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен Чăваш Республики виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачашăн кашни уйăхра пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе чухлĕ памалли пулăшу шучĕпе федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ илсе тăма пуçласси çинчен каларĕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче РФ Президенчĕ Владимир Путин «Раççей Федерацийĕн демографи политикине пурнăçламалли мерăсем çинчен» Хушăва улшăнусем кĕртнĕ. Çак улшăнусем пĕчĕк çураласлăхлă коэффицентлă регионсене пырса тивеççĕ. Аса илтеретпĕр: 2016 çулта Чăваш Енри демографи кăтартăвĕсем çĕршыври вăтам кăтартуран ирттернипе 2017 çулта çуралнă ачасемшĕн федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрман. 2018 çулта Раççей Президенчĕ кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшӳллĕн çак тӳлеве республикăри 8,7 пин ача илсе тăрĕ.

Альбина Егоровна «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» программăпа Ишек ял тăрăхĕнчи Мăн Марка тата Çатра Марка ялĕсем патне пыракан çула реконструкцилеме 14 млн тенкĕ ытла уйăрма планланине палăртрĕ.

## Наркотик серепинче ачасем те пур

Чăваш Республикинче наркомание хирĕç тăрасси тата профилактика ирттересси çинчен сăмах хускатнă май Альбина Егоровна статистикăпа паллаштарчĕ. Чăваш Республикинче пурнăçра пĕрре те пулин наркотик тутаннă 1490 çынна регистрациленĕ, çак наркăмăш серепине кĕрсе ӳкнисем – 840 çын. Наркотикпе туслашнисенчен ытларах пайĕ (89%) – арçынсем. Пуçласа наркоманипе чирлесси 26% чакнă. Медицина учрежденийĕсенче 22 çул çитмен учетра тăрать, çакă иртнĕ çултипе танлаштарсан 15,4% пĕчĕкрех. Кăçал ЧР ШĔМĕн полици органĕсем наркотиксемпе тата психотроплă хутăшсемпе туслашнă çул çитмен 5 ачана тупса палăртнă.

РФ МЧСĕн Шупашкар районĕнчи надзор тата профилактика ĕçĕ-хĕлĕн пайĕн пуçлăхĕ Денис Портнов кăçал район территорийĕнче алхаснă пысăк пушарсене аса илчĕ. Чылай инкекре вут-çулăм çулне харпăрлăх хуçисем огнетушительсемпе усă курма пĕлнĕ пулсан пӳлме пултарнине палăртрĕ вăл. 2017 çулхи 10 уйăхра республикăра 695 пушар алхаснă, вĕсенче 53 çын пурнăçĕ таталнă. Иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан пушарсен шучĕ 11% чакнă. Районти 9 муниципалитетра пушарсен шучĕ ӳснĕ. Акă, сăмахран, иртнĕ çул Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕнче «хĕрлĕ автан» пĕртте ташламан пулсан, кăçалхи ноябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне вутçулăм 5 хут тухнă.

Çавăн пекех тĕл пулура тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассипе çыхăннă ыйтусене те уçăмлатрĕç. Патшалăх тытăмĕнче ĕçлекен адвокатсем Владимир Михайлович Петров тата Марина Юрьевна Николаева Шупашкар районĕнчи халăха социаллă пулăшу паракан уйрăмра гражданасене уйăхра пĕрре йышăнаççĕ.

Юртукассисене лавкка патне пыракан çула асфальт сарас майсем кăсăклантарчĕç. Альбина Егорова вырăнти шухăш çинче никĕсленнĕ проектсене пурнăçлама малашне те пулăшса пырасса шантарчĕ. Çак тĕллевсем валли республикăра 75 млн тенкĕ уйăраççĕ. Проектсене тăратсан конкурс суйлавне кирек хăш ял тăрăхĕ те хутшăнма пултарать. Хальхи вăхăтра муниципалитетра çак программăпа 8 проект пурнăçланать.

Тутаркасси ял тăрăх пуçлăхĕ Анатолий Фомин çава патне пыракан юхăннă çул пирки ыйтăва уçăмлатрĕ. Çак масарта 4 ял тăрăх çыннисене тирпейлесе пытараççĕ. Çула юсамашкăн чылай укçа-тенкĕ кирлĕ е малтанласа çула хытармашкăн кирпĕч ванчăкĕсене шыраса тупмалла. «Тĕп шыв пăрăхĕнчен çулталăкĕпех тутлă мар шăршăллă шыв юхать...» – ӳпкелешрĕ ял халăхĕ. Анатолий Фомин сăмахĕсем тăрăх, вырăнти скважина тарăнăшĕ 24 метр кăна. Çак ыйтăва çĕнĕ скважина чавни е халь ĕçлекен шыв пăрăхне таса çăл куç таран тăсни çеç татса пама пултарни çинчен каларĕ вăл.

Райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев ял хуçалăх аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштарчĕ. Районти 18 ял хуçалăх предприятийĕсенчен 14-шĕ кăçалхи 9 уйăха 609,6 млн тенкĕ тупăшпа вĕçленĕ.

Юртукасси клуб заведующийĕ Вера Блинова çĕнĕ клубпа юнашар ларакан кивĕ йывăç çуртри музея юсамалли çинчен пĕлтерчĕ. Анатолий Фомин смета хатĕрлемелли, унтан тен пĕр-пĕр программăна хутшăнма май килесси çинчен ăнлантарчĕ.



Сархурăнти тĕл пулу

П. Иванов сăн ӳкерчĕкĕсем

## Юхăннă çулсем, кадрсем

Çакăн хыççăн информаци ушкăнĕ Çĕнĕ Тутаркасси поселокĕнчи пултарулăх çуртĕнче вырăнти çынсемпе тата «Атлашевский» СХК» ООО ĕç коллективĕпе тĕл пулчĕ. Медицина учрежденийĕсене централизациленĕ тытăма куçарнипе медицина анализĕсене Кӳкеçре тĕрĕслеççĕ, çакă диагноза хăвăрт палăртассине чарса тăрататъ. Кунсăр пуçне Тутаркассинчи участокри больницăра кадрсен çитменлĕхĕ те сисĕнет. Çынсем тухтăрсем çитменнипе медицина учрежденине хупассишĕн хăранине пĕлтерчĕç.

Çавăн пекех Çĕнĕ Тутаркассинче обществăлла мунчана хута ярас ыйтăва та хускатрĕç. Унччен маларах поселок вĕçĕнче уйрăм предпринимателĕн мунчи ĕçленĕ, анчах ăна тепĕр çынна сутнă хыççăн халĕ хупах. Вырăнти халăх ăна уçма ыйтрĕ. Тутаркасси ял тăрăх пуçлăхĕ Анатолий Фомин сăмахĕсем тăрăх, харпăрлăхăн çĕнĕ хуçи çак çуртăн çуррине çынсем валли уçма планлать, унта эрнен тĕрлĕ кунĕнче хĕрарăмсем тата арçынсем мунча кĕме килеççĕ. Çуртăн тепĕр пайне вара урăх тĕллевпе усă курасшăн. Райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев çак ыйтăва тĕплĕн пăхса тухма, милĕкпе çапăнас текенсен шучĕ нумай пулсан мунча таран автобус маршручĕ те яма сĕнчĕ.

**ЕЛЕНА ГУБАНОВА,**
**АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

# Çулĕ такăр пултăр

• АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

**2018 çулта вырăнти пĕлтерĕшлĕ автоçулсене юсассипе çыхăннă мероприятисем çинчен халăха пĕлтерес тĕллевпе Кӳкеçри тĕп культура çуртĕнче «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» программăпа килĕшӳллĕн реализацилененекен «Шупашкар хула агломерацийĕн транспорт инфраструктурине комплекслă аталантарни» программăн уçă итлевĕсем иртрĕç. Вĕсене райадминистраци пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх тата экологи пайĕн пуçлăхĕ Сергей Ванюшкин ертсе пычĕ.**

→10



Редакци архивĕнчи сăн ӳкерчĕкĕ

**ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ**

Тăлăх ачасене, ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасене пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтерме Шупашкар район администрацийĕ аукцион пирки пĕлтернĕ. Контрактăн пуçламăш хакĕ –

**1857240 тенкĕ**

Пурăнмалли условисене лайăхлатма черет кĕтекенсен йышне 2016 çул вĕçленнĕ тĕле районта 123 тăлăх ачана кĕртнĕ.

**ТЕЛЕФОН ТЕРРОРИЗМĔПЕ ÇЫХĂННĂ ПРЕСТУПЛЕНИСЕН ШУЧĔ ЎССЕХ ПЫНИНЕ КУРА** райадминистрацире эрнесерен иртекен канашлура районти полици уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕ Андрей Рябов предприяти-организаци, учреждени, ял тăрăх ертӳçисене иккĕлентерекен япала асăрхасан туса ирттермелли ĕçсем пирки персоналпа вырăнта калаçу иртterme сĕнчĕ. «Чи малтанах полицие шăнкăравламалла, унтан эвакуацие хатĕрленмелле. Анчах та кашни вак-тĕвек пиркиех евитлемелле мар, сирпĕнме пултаракан хатĕрсен уйрăм паллисем пур: пăралук, çыхăну аппаратури, сăмахран, телефон т.ыт.те», – ăнлантарчĕ Андрей Витальевич.

**АЧАСЕНЕ ПРАВО ПУЛĂШĂВĔ ПАМАЛЛИ КУН, НОЯБРĔН 20-МĔШĔ** тĕлне районта тӳлевсĕр юридици консультацийĕпе тивĕçтерессине йĕркеленĕ. Çак кун тата паян суд приставĕсен Шупашкар районĕнчи пайĕн аслă приставĕ Игорь Матвеев Кӳкеç поселокĕнче (Советски урамĕнчи 88-мĕш çурт) йышăнать. Суд приставĕсен ачасене пырса тивекен ĕçĕ-хĕлĕ пирки унран ыйтса пĕлме май пулĕ. Йышăнăва çырăнмалли телефон номерĕ: **8(83540) 2-33-50.**

Паянах райадминистрацин халăха социаллă пулăшу паракан уйрăмĕнче (Кӳкеç поселокĕ, Советски урамĕ, 23-мĕш çурт) адвокатăн тӳлевсĕр консультацийĕпе усă кураççĕ.



**РАЙАДМИНИСТРАЦИН ВĔРЕНТӲ УПРАВЛЕНИЙĔН ОПЕКĂПА ПОПЕЧИТЕЛЬ УЙРĂМĔ** ачасен прависене пырса тивекен ыйтусемпе ноябрĕн 17-мĕшĕччен хĕрӳ лини ирттерет. Çыхăнмалли телефон: **8(83540) 2-30-93.** Ноябрĕн 20-мĕшĕнче вара вĕсем халăха хăйсем патĕнче (Кӳкеç поселокĕ, Советски урамĕ, 25-мĕш çурт) йышăнаççĕ.

# Репресси органĕ мар, тӳлевсĕр адвокат

• ÇАВРА СĔТЕЛ



**Çум çаккипе тĕрме пирки аса илме хушмасть вырăс халăх каларăшĕ. Суд сакки çине кирек кам та ларма пултарать: пурнăç мĕн хатĕрленине пире маларах никам та пĕлтерсе тăраймасть. Пĕр йăнăш утăм – закон чаракĕ урлă ярса пуснă çыншăн вара йĕплĕ хӳме леш енче пачах урăхла пурнăç пуçланать. Хăнăхнă пурнăçран хупă «тĕнчере», тăвансенчен, адвокатран аякра, тĕрме-колони ĕçченĕсен пăхăнăвĕнче ăна хăй тĕллĕн хӳтĕлеме те ансат мар. Чылай чухне унта айăплав вăхăчĕ вăраха тăсăлнисем хăйсен «законĕсене» кĕртме тытăнаççĕ. Пирĕн черетлĕ çавра сĕтел хăни – Чăваш Республикинчи юсану учрежденийĕсенче айăпланнисен прависене хӳтĕлессине асăрхаса тăракан Шупашкар прокурорĕ Петр ФИЛИППОВ. Мĕнлерех-ха вĕсем, айăплав вăхăтне йĕплĕ хӳме леш енче ирттерекенсен прависем, тивĕçĕсем, мĕнлерех ӳкерчĕк тухса тăрать тĕрĕслев органĕ çăхав тăрăх вырăна çитсен – çакăн пирки сăмах пуçаратпăр.**

**– Петр Петрович, сирĕн ĕç фрончĕ – ирĕклĕхсĕр хăварнă вырăнсем. Ытти прокуратура органĕсенчен сирĕн тивĕç тата мĕнпе уйрăлса тăрать?**

– Чăваш Республикинчи юсану учрежденийĕсенче айăпланнисен прависене хӳтĕлессине асăрхаса тăракан Шупашкар прокуратури ятарлă прокуратура шутланать. Унăн тĕп тĕллевĕ – республикăра айăплава пурнăçлакан юсану учрежденийĕсенче закона мĕнле пурнăçланине асăрхасси. Анчах та çакă прокурор ĕçĕ уголовлă айăплав кодексне пăхăнассине сăнаса тăнипе кăна вĕçленнине пĕлтермест. Эпир санитари правилисем, ĕç, бюджет законодательствисем, коррупцие, монополие хирĕç законсем тĕлĕшпе те сыхă.

**– Айăпланнисен прависемпе пĕрлех тивĕçсем те пур. Айăплав вăхăтне юсану учрежденийĕнче кĕрĕк арки йăвалаа ирттермелле мар-çке вĕсен. Ĕç – юсанăвăн чи ăнăçлă çул-йĕрĕ.**

– РФ Уголовлă айăплав кодексĕн 103 статйи айăпланнă кашни çынна юсану учрежденийĕ палăртнă вырăнта вăй хума хушать. Ку вăл – конституци прави мар, тивĕç! Çакăншăн яваплăх учреждени администрацийĕ çине те тиенет, хĕрарăм е арçын, çулсене кура шăпах вăл ĕçлеттерме тивĕç. Çакă 60 тултарнă арçынсемпе 55-рен иртнĕ хĕрарăмсене, 1 тата 2 ушкăн инвалидĕсене кăна тивмест. Юлашкинчен асăннисем РФ Инвалидсен социаллă хӳтлĕхĕ пирки калакан законпа килĕшӳллĕн хăйсен ирĕкĕпе çеç ĕçлеме пултараççĕ. Республикăри юсану учрежденийĕсен пуçлăхĕсемпе иртнĕ юлашки канашлура ирĕклĕхсĕр хăвармалли вырăнсенче преступленисен шучĕ ӳсни пирки сăмах пычĕ. Ĕçпе тивĕçтернĕ айăпланнисен йышне ӳстерессине учрежденире дисциплинăна çирĕплетмелли пĕртен-пĕр çул-йĕр тесе йышăнтăмăр: ĕçлеме хирĕçленĕ кашни тĕслĕхре айăпланнисене тытса тăрассипе, апатлантарассипе çыхăннă тăкаксене хăйсенчен шыраса илес ыйтăва çĕклерĕмĕр. Çавăн пекех айăпланнисен професси пĕлĕвĕ те илмелле, вĕренмелле, кун йĕркине кĕртнĕ воспитани мероприятийĕсене хутшăнмалла. Анчах та законăн çакăн пирки калакан пункчĕ те кашни учрежденирех ĕçлемест. Арçынсен 6-мĕш юсану колонийĕнче иртнĕ тĕрĕслев айăпланнисен професси пĕлĕвĕ илес ирĕкне пур чухне те шута хуманнине кăтартса пачĕ. Шупашкар районĕнчи Толикасси ялĕ çывăхĕнче вырнаçнă учрежденире айăплав вăхăтне ирттерекен 6 çынна кунта кусăн мар майпа пĕлӳ пама Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн вĕренекенĕсен шутне кĕртнĕ. Анчах та прокуратурăн тĕрĕслев материалĕсенчен арçынсем унта вĕренменни паллă. Вăтам професси пĕлĕвĕн вĕрентӳ программисем тăрăх патшалăхăн пĕтĕмĕшле аттестацийĕн йĕркине пăсса 2014 çулта, арçынсене «техникума илнĕренпе» 4 çул иртсен, вĕрентӳ учрежденийĕн директорĕ хайхи арçынсене диплом тата квалификаци парасси пирки хушу кăларнă. Ку документра уголовлă айăплав вăхăтне ирттерекен ултă студент вĕрентӳ программине пурнăçланине кăтартни чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Агроном квалификацине тата çакна çирĕплетекен диплома вĕсене мĕне кура панă — паллă мар.

**– Бюджета сăтăр кӳрекен тӳнтерле ĕç-пуçа çичĕ çултан мĕнле майпа уçăмлатма май килчĕ-ха?**

– Техникум директорĕ должноç полномочийĕсемпе киревсĕр шухăшпа усă курни обществăн тата патшалăхăн законпа хӳтĕленекен интересĕсене тӳрремменех пырса тивет. Кунашкал киревсĕрлĕхе асăрхамасăр иртме май çук. Çавăнпа та шанманлăх палăрсанах тĕрĕслев пуçартăмăр. Кадрсем хатĕрлессипе сăлтавласа патшалăх хыснинчен илнĕ укса-тенке çилпе вĕçтернĕ пекех çакă. РФ УПК 37 статйипе килĕшӳллĕн прокуратура тĕрĕслевĕн материалĕсене следстви органĕсене ярса патăмăр. Вĕсем тăрăх техникум директорĕ тĕлĕшпе РФ УК 285 статйин 1-мĕш пайĕпе (должноç полномочийĕсемпе чикĕрен иртсе усă курни) уголовнăй ĕç пуçарнă.

**– Кашни юсану учрежденийĕнчех РФ Юстици министерствин хушăвне пăхăнса çирĕплетнĕ шалти кун йĕркин правилисем пур. Вĕсене пурнăçламанни айăпланнисемшĕн мĕнпе вĕçленме пултарать?**

– Выговор, дисциплина штрафĕ, 15 талăклăх штраф изоляторĕ (ШИЗО), ултă уйăхлăх камерăллă пӳлĕм – йĕркене пăсакансене явап тыттарма яваплăх виçи тĕрлĕрен. Ăна куллен пăсакансене суд йышăнăвĕпе чылай çирĕпрех режимлă колонисене, тĕрме таранах, кусарма пултараççĕ.

**– Мероприятисене куллен хутшăнакансене, тӳрĕ кăмăлпа вăй хуракансене хавхалантараççĕ-и?**

– Çакăн пек чухне вĕсем айăплав вăхăтне учрежденирех çăмăллатнă условисенче ирттерессе шанма пултараççĕ. Кунта тĕл пулу вăхăчĕ те, передача виçи те ытларах. Кĕске отпуск та пама пултараççĕ. Вĕсем хăтлăрах пӳлĕмсенче пурăнаççĕ.

**– Йĕплĕ хӳме леш енчи пурнăç, кирек хăш вăхăтра ӳкернĕ кинофильма ĕненес пулсан та, «дедовщинăллă» çар пурнăçне аса илтерет. Пирĕн республикăра айăпланнисен хутшăнăвĕсем мĕнле йĕркеленеççĕ-ха? Учрежденин вĕсем пĕр-пĕрне хĕсĕрленипе кĕрешмелле-и?**

– Администрацин айăпланнисен хушшинчи ăнланманлăха, курайманлăх палăрăмĕсене сирес тĕлĕшпе çакна асăрханă хыççăн тăхтамасăр мерăсем йышăнмалла. Унсăрăн çакă пысăк хирĕçтăрусене çавăрăнма та пултарать. Мĕскĕнленекенсем хĕсĕрлекенсене тавăраççĕ, çакă вара çĕнĕ инкексемпе тата преступленисемпе хăрушă. Çавăнпа та йĕрке тăвассине айăпланнисен йышĕнчи «авторитетсене» шаннине эпĕ сивлетĕп кăна мар, айăплава пурнăçлакансене çакăншăн явап тыттармалла тесе шухăшлатăп.

**– Хăйĕн хăрушсăрлăхĕшĕн мĕнле майпа тăрăшма пултарать айăпланакан?**

– Судпа айăпланнисен хăйсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес ирĕк пурри пирки РФ Уголовлă айăплав кодексĕнче каланă. Çакăншăн пăшăрханма сăлтав пулсан вăл учрежденире вăй хураканран çырса пулăшу ыйтма пултарать. Должнăçри сăпат тăхтамасăр мерăсем йышăнма тивĕç. Учреждени пуçлăхĕ çак заявлени тăрăх айăпланакана нимĕн те хăратман вырăна куçарать.

**– Çав вăхăтрах учрежденири чылай пăтăрмах, лару-тăру пирки пысăк инкек сиксе тухсан тин пĕлетпĕр. Республикăри учрежденисенче закона пăснине пытарнă тĕслĕхсем пулнă-и?**

– Юсану учрежденийĕн кашни пулнă е пулма пултаракан преступление регистрацилемелле. Апла пулин те уголовлă айăплава пурнăçлакан тытăмра дознанин ятарлă тытăмĕсем çуккине кура вĕсен çак ĕçе йĕркелеме полномочи çук. Эппин, преступление пăхса тухса йышăну тума пултараймаççĕ. Анчах та çакăн пирки пĕлтернине йышăнма тивĕç. Виçĕ талăкран кая хăвармасăр тĕрĕслев хыççăн ăна шалти ĕçсен органне е следстви комитетне çитермелле. Çакăн пек тĕслĕхсене пытарма хăтланса вĕсен пуçлăхĕсем йăнăшаççĕ кăна. Курмăш пулса ирттернĕ пĕр преступлени теприне çуратма пултарать. РФ Генеральнăй прокурорĕн хушăвне пурнăçласа ятарлă прокуратура кашни уйăхрах учрежденисен оперативлă уйрăмĕсен процессуаллă ĕçĕ-хĕлне тĕрĕслесе тăрать. Вĕсенчен пĕри 3-мĕш колонире айăпланакан аманнипе çыхăннăччĕ. Колони пуçлăхĕн çумĕ ăна улталаса тата шантарса сулахай куçне хăй ӳксе амантни пирки калама ӳкĕте кĕртнĕ. Спецпрокуратура следстви органĕсене явăçтарса пуçарнă тепĕр тĕрĕслев арçынна пĕр отрядра пурăннă тепĕр айăпланнăскер амантнине кăтартса пачĕ. Ăна çын сывлăхне сиен кӳнĕшĕн РФ УК 115 статйипе, колони пуçлăхĕн çумне должноç полномочийĕсемпе усал шутпа усă курнăшăн РФ УК 285 статйипе явап тыттарнă.

**– Йĕплĕ хӳме леш енче усă курма чарнă япаласем пур. Апла пулин те телефон кăна мар, наркотик хутăшĕсем илсе кĕнĕ тĕслĕхсем пирки те пĕлетпĕр эпир. Закона мĕнле майпа çаврăнса иртме май тупаççĕ-ха айăпланнисем?**

– Кунта чи малтанах айăпланнисемпе юсану учрежденийĕсенче вăй хуракансен службăпа çыхăнман нимĕнле хутшăнусем те пулма юраманни пĕлтерĕшлĕ. Наркотиксен закона хирĕçле çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене тупса палăртассине тата усса парассине вăйлатасси республика прокуратуринче иртнĕ оперативлă канашлура тĕп тема пулчĕ. Наркотик сарнăшăн айăпланнисемпе уйрăмах тимлĕ пулмалла, вĕсене пытарнă вырăнсене шыраса тупас енĕпе мерăсем йышăнмалла. Телефон пирки калас пулсассăн – ăна илсе кĕрсе теветкелленме кирлех-ши? Айăпланнисен çыру çӳретес правине никам та пăрахăçламан. Цензура тĕллевĕпе те учреждени администрацийĕ ăна виçĕ талăкран ытларах тытса тăма пултараймасть. Суда, прокуратурăна, айăплава пурнăçлакан управленин çӳлти органне, РФ Этем правипе уполномоченнăй патне, РФ законĕпе, Этем правипе Европа сучĕ йĕркеленĕ обществăлла сăнав комиссине яраканнисене вара пачах та тĕрĕслеме ирĕк çук. Çакна пурнăçланисене те сăнатпăр. Кунсăр пуçне тĕл пулусене колонире те ирттеретпĕр. Унта вара куçа-куçăн калаçма та май пур. Прокуратура ĕçченĕсене кăра, репресси органĕ пек йышăнасси аякра юлчĕ, эпир паян чылайăшĕшĕн тӳлевсĕр адвокат пекех.

**ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ**

**ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ**

Паян Чăваш Енре **9** юсану учрежденийĕ шутланать. Вĕсенчен **1** – колони-поселени, пĕтĕмĕшле режимлă **4** колони, **3** – çирĕп режимлисем, **1** – сиплевпе юсану учрежденийĕ.

**Чăваш Республикинчи юсану учрежденийĕсенче айăпланнисен прависене хӳтĕлессине асăрхаса тăракан Шупашкар прокуратури кăçалхи 10 уйăхра юсану колонийĕсенче 102 тĕрĕслев йĕркеленĕ, вĕсенче йĕркене пăснă 292 тĕслĕхе тупса палăртнă. Айăпланнисен ĕç хăрушсăрлăхĕнчи, санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи, суд йышăнăвне пурнăçласа сăтăршăн саплаштарма укçана шыраса илес прависене хӳтĕлесе суда 8 тавăç тăратнă.**

www.tavanen.ru Ноябрь 16 - 22, 2017 Таван Ен № 45 (10607-10608)

# ТРЕНЕР, УЧИТЕЛЬ, КРАЕВЕД...

• ХИСЕПЕ ТИВĔÇЛĔ

**«Кайăк хитре тĕсĕпе, этем – хăйĕн ĕçĕпе», – тесе калаççĕ ваттисем. Кашни çыннăн пурнăçĕ – хăйне евĕрлĕ кĕнеке. Вăл мĕнле çырăнасси пирĕнтен хамăртан нумай килет. Пурнăça тивĕçлĕн ирттермелле. Çак вĕрентĕве тĕпе хурса пурăнать те Республикăн тава тивĕçлĕ учителĕ, историк-краевед, çур ĕмĕр район хаçачĕпе тачă çыхăну тытакан штатра тăман корреспондент Леонид Павлов. Вăл хăйĕн пурнăçĕн пысăкрах пайне шкул ачисене тивĕçлĕ пĕлӳ тата воспитани парас, районăн тата тăван тăрăхăн историне тĕпчес ĕçе халалланă. Çывăх пĕлекенсем ун пирки «чĕрĕ энциклопеди» тесе калаççĕ.**


Кӳкеç шкулĕ, 1977 çулти выпускниксемпе

## Раççей шайĕнчи ăмăртура – пĕрремĕш

Леонид Павлов 1936 çулта январĕн 1-мĕшĕнче Чăрăшкасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Тăван çĕршыв йывăрлăх тӳснĕ, совет çарĕсем фашиста хирĕç çапăçава кĕнĕ вăхăтра ялти шкулта пĕрремĕш хут парта хушшине ларать вăл. 1947-1950 çулсенче Апашри 7 çул вĕренмелли, ун хыççăн тепĕр 4 çул Кӳкеçри вăтам шкулсенче пĕлӳ пухать. Шкул пĕтерсен çулталăк тăван колхозра вăй хурать. Çамрăк каччăн 1955 çулхи сентябрь уйăхĕнче салтака кайма ят тухать. Кĕçĕн командирсене хатĕрлекен шкулта лайăх кăтартусемпе пăларса электрорадиомеханик, телеграфист специальноçĕсене алла илет. Хĕсметрех водитель правиллĕ пулать, парти шкулне пĕтерет, тăван киле сержант званийĕпе таврăнать. 3 çул службăра тăнă хушăра тăван тăрăхра 2 хутчен отпуска тивĕçет.

«Ĕнерхи» салтака Апашри вăтам шкулта военрук тата физкультура учителĕ пулса ĕçлеме сĕнеççĕ. Ултă çул асăннă шкулта вăй хурать. Çав вăхăтра шкул команди спортăн тĕрлĕ тĕсĕнче пьедестал çинчен анман та темелле, районти ăмăртусенче пĕрре мар мала тухнă, республикăра та маттур çамрăксем малти ретре пулнă.

1963-1964 çулсенче Леонид Павлов – Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче йĕлтĕрçĕсен командин тренерĕ. Тăрăшсан çимĕçне тутанма пулатех. Ĕçе чунчĕререн парăнса ĕçлени çитĕнӳсем патне илсе çитеретех – Раççейре мала тухассишĕн педвузсен хушшинче иртнĕ эстафета ăмăртăвĕнче хĕрсен команди пьедесталăн 3-мĕш картлашки çине хăпарать. Икĕ çултан шăпа Леонид Павловича Шупашкарти медицина училищине илсе çитерет. Физкультура преподавателĕн тăрăшулăхĕ кунта та курăнать – хула тата республика шайĕнчи ăмăртусенче хĕрсен команди пăшалтан пересcипе, йĕлтĕр чупăвĕнче, велосипедпа ярăнассипе тата çăмăл атлетикăн ытти тĕсĕнче яланах малтисен ретĕнче пулнă. 1965 çулта медицина училищисен командисен хушшинче иртнĕ Раççей шайĕнчи ăмăртура чăваш пикисем 50 командăран финиша чи малтан çитсе ылтăн медале тивĕçеççĕ. Леонид Павлова, 29 çулхи тренера, лайăх кăтартусемшĕн РСФСР Сывлăх сыхлав министерствин Хисеп хучĕпе тата пĕр уйăх ĕç укçипе танлашакан премипе чысласçĕ. Тепĕр çул вăл хатĕрленĕ команда Кабардин-Балкар Республикинче иртнĕ велосипед чупăвĕнче пьедесталăн 1-мĕш картлашки çине хăпарма тивĕçет. Ку вăл – çав тери пысăк çитĕнӳ! Ĕçе чунтан парăннă тренер федераци ведомствин Хисеп хутне икĕ хут тата ятран панă сехете тивĕçет. Студентсене ăмăртусене хатĕрленĕ вăхăтра Леонид Павлович хăй те спортра çитĕнӳсем тăвать: район тата республика шайĕнчи ăмăртусенче йĕлтĕрпе чупассипе, слаломра, пăшалтан пересcипе пĕрре кăна мар пьедестал çине хăпарма тивĕçет.

Ĕçленĕ вăхăтрах çамрăк Мускаври тренерсен тĕп шкулне куçăмсăр майпа вĕренсе пĕтерет. 1964-1969 çулсенче И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ-ра куçăмсăр майпа ăс пухса историпе обществознани учителĕн профессине алла илет. 1967 çултанпа Кӳкеçри 1-мĕш шкулта физкультура, истори тата обществознани предмечĕсене вĕрентме тытăнать. Вăл ĕçленĕ çулсенче вĕренекенсем спортăн тĕрлĕ тĕсĕнче лайăх кăтартусемпе пăлараççĕ, ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнаççĕ, район чысне республика шайĕнчи ăмăртусенче хӳтĕлеççĕ. 1969 çулти май уйăхĕнче Кӳкеçри 1-мĕш шкул команди «Советская Чувашия» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ эстафетăра пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарать. Ĕçе парăнса тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Леонид Павловича ЧАССР Спорт министерстви, район военкомачĕ Хисеп хучĕсемпе чысласçĕ, федерацин Атăлçи çар округĕн командующийĕ ăна капитан званине парать.

> Студентсене ăмăртусене хатĕрленĕ вăхăтра Леонид Павлович хăй те спортра çитĕнӳсем тăвать...

## Музей йĕркелӳçи

Истори учителĕ пулса ĕçлесе те вăл районшăн нумай пĕлтерĕшлĕ ĕç пурнăçланă. Унăн кăтарту хатĕрĕсемпе пуян кабинечĕ темиçе çул районта «Чи лайăх истори кабинечĕ» ята тытса тăнă. Леонид Павлович пуçарнипе районта истори предмечĕпе пуçласа олимпиада ирттернĕ, çак пуçарăва ЧАССР Çутĕç министерстви те ырланă. Унăн 9 вĕренекенĕ республика шайĕнче олимпиадăсенче малти вырăнсене йышăннă, 20 ытла шкул ачи унăн çулĕпе кайса истори енĕпе пĕлĕве тăснă, паян истори учителĕ пулса вăй хураççĕ. Паянхи кун Кӳкеçри 1-мĕш шкулта вăй хуракан истори предмечĕн 3 вĕрентекенĕ хăй вăхăтĕнче унăн вĕренекенĕсем пулнă.

1985 çулта КПСС райком партин 1-мĕш секретарĕ Г.В. Романов культура çуртĕнче сельсовет председателĕсене, шкул ертӳçисене, культура ĕçченĕсене пухса «Районăн çар тата ĕç мухтавĕн» музейне уçасси пирки каланă. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 40 çул çитнине халалласа майăн 9-мĕшĕ тĕлне уçас тенĕ. Çак ĕçре Леонид Павловăн тӳпи çав тери пысăк. Вăл çак ĕçе вĕренекенсене явăçтарнă, хăй те сахал мар материал хатĕрленĕ, аслă класcенче вĕренекенсенчен экскурсоводсене хатĕрленĕ. Кооперации институтне вĕренме кĕме хатĕрленекенсен умĕнче лекцисем вулама та вăхăт тупнă вăл, темиçе çул ЧПУ-ра экзаменсем йышăнакан комисси членĕ пулнă.

1986 çулти январь уйăхĕнче Кӳкеçри 1-мĕш шкул 100 çулхи юбилейне паллă тăвать. Паллă кунччен 3 уйăх маларах шкул директорĕ В.С. Шумилов учительсене пухса çĕнĕ музей уçассине пĕлтерет. Яваплине те палăртаççĕ – Леонид Павлов. Ун чухне ăна материалсене пухма В.Н. Ташкова тата Л.А. Савинова учительсем хастар пулăшаççĕ, шкул ачисемпе ашшĕ-амăшĕ те хастарлăх кăтартаççĕ. Палăртнă кун музей алăкĕсем уçăлаççĕ. Хăнасен хушшинче 1912 çулта шкул пĕтернĕ Василий Яковлевич Свинцов пулнине, тĕрлĕ çулта шкул пĕтернĕ ачасем те аякра юлманнине палăртать Леонид Павлович. Анчах та вăхăт шелсĕр – 25 çул шкул мăнаçлăхĕ пулнă музей «çухалать».

1989 çулта РОНО пуçлăхĕ Г.В. Николаев Леонид Павлова хăйĕн патне чĕнтерсе «Школа и учительство района» музей уçма сĕнет. Виçĕ уйăха яхăн материалсем пухать пуян опытлă учитель. Ĕçĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе вăл районти 15 вĕрентекен Ленин ячĕллĕ ордена, тепĕр çавăн чухлĕн РСФСР тава тивĕçлĕ учитель ятне тивĕçнине тупса палăртать. Шкулăн 2 хутлă çуртĕнчи пĕр класра уçăлнă музей çулталăка яхăн ĕçлет. РОНО пуçлăхĕ урăх ĕçе куçсан музей та хупăнать.

Леонид Павлович çитĕнекен ăрăва пĕлӳ тата тивĕçлĕ воспитани парас тĕлĕшпе çур ĕмĕре яхăн вăй хунă. 47 çултан 33-шне вăл Кӳкеçри 1-мĕш шкула халалланă. Çав вăхăтра вăл 4 класс кăларма ĕлкĕрнĕ. «Эпĕ вĕрентнĕ ачасенчен пĕри те милицин ача-пăча пӳлĕмĕнче учетра тăман. 1993 çулта шкул пĕтернĕ ачасемпе – класра 33 ача вĕреннĕ – «Районти чи лайăх класс» конкурсра çĕнтерсе эрнелĕхе Мускава кайма тӳлевсĕр путевка çĕнсе илтĕмĕр. 1998 çулта шкултан вĕренсе тухнă 35 ача çав тери маттурччĕ, никамăн та аттестатра «3» паллă пулман. Вĕсенчен 13-шĕ шкула медальпе вĕçлерĕç. Паян вĕсем пурте аслă пĕлӳллĕ, хăйсене килĕшекен профессие алла илсе ĕç вырăнĕсем тупнă», – каласа парать ачасен хисепне, юратăвне çĕнсе илнĕ пысăк сас паллипе çырăнакан УЧИТЕЛЬ.

## Çур ĕмĕр хаçатпа пĕрле

1967 çултанпа Леонид Павлович район хаçачĕпе тачă çыхăну тытать. Пичет кăларăмĕнче çынсене, тăван района, çуралса ӳснĕ тăрăха халалланă статьясем час-часах кун çути кураççĕ. Тарăн шухăшлă хайлавсенче вăл иртнĕ тата хальхи пурнăça сăнлать, çивĕч ыйтусене хускатать. 1996 çулта унăн Кӳкеçри МТС уçăлнăранпа 60 çул çитнине халалланă кĕнеки кун çути курнă. 1997 çулта район администрацийĕн хушăвĕпе В.П. Станьял ăсчахпа иккĕшĕ район историне тĕпчесе «Сторона моя Чебоксарская» кĕнеке калăпланă. 1999 çулта Г.П. Краснов шăллĕпе иккĕшĕ çуралнă ялĕн историне мĕн авалтан тĕпчесе «Эпир Токаш ачисем» кĕнекене çынсем патне çитернĕ. Тинтерех тухнă Шупашкар район энциклопедийĕнче те унăн тӳпи пĕчĕк мар – тивĕçлĕ çынсем пирки 20 статья хатĕрленĕ. Энциклопедин 2-мĕш пайне кун çути кăтартас тĕллевпе вăл тата 10 çын пирки материал пухнă. «Бичурин тата хальхи самана» музейпа та тачă çыхăнса ĕçлет Леонид Павлов. Унăн 600 ытла материалĕ хăйĕн вырăнне тупнă, паян та вăл çак ĕçрен аякра тăмасть.

Сăпайлă, ăш пиллĕ те ыра кăмăллă, хăйĕн çитĕнĕвĕсем пирки каласма кăмăлламасть вăл. Кăкăр çапса çитĕнӳсемпе мухтанасси те – уншăн ют. Хăй ăс панă ачасем унăн ятне ырăпа асăнни, унăн урокĕсене аса илни – çаках пулĕ çур ĕмĕре яхăн вĕрентекенре тимленĕ Леонид Павловичшăн чи пысăк тав сăмахĕ...

**ВЕРА ШУМИЛОВА**

• ШУПАШКАР РАЙОННЕ – 90 ÇУЛ

# Коллективизаци пуçланнă чух

**Октябрь революцийĕ хыççăн кăларнă Çĕр декречĕ тăрăх кулаксен, патшан, чиркӳпе мăнастирсен çĕрĕсене туртса илсе хресченсен аллине панă – пĕтĕмпе 150 миллион гектар. Ялти çынсем ун чух çĕршыври пĕтĕм халăхăн иккĕ виççĕмĕш пайне йышăннă, 25 миллион çын килти хуçалăха тытса пынă. Çĕнĕ пурнăç тунă вăхăтра кулаксен пусмăрĕнчен хăтăлса пĕрлештернĕ хуçалăхсем тăвас ыйту çивĕч тăнă. 1923 çулта ушкăнăн-ушкăнăн пĕрлешсе тата ял хуçалăх машинисемпе усă курса ĕçлес тĕллевпе В.И. Ленинăн кооперации планне пурнăça кĕртме пуçлаççĕ. Кооперативсем, артельсем чăмăртанаççĕ. Тепĕр пилĕк çултан, 1927 çулти декабрьте ВКП(б)-ăн XV-мĕш съезчĕ иртет. Ăна «коллективизаци съезчĕ» ятпа пĕлетпĕр. 1928-1932 çулсем – пĕрлештернĕ хуçалăхсем вăй илнĕ вăхăт. Колхозсене тума ялти активистсем, ялкорсем, избачсем, комсомолецсем, хулари заводсенчен янă рабочисем пулăшнă.**

**1929 çулта ӳкернĕ çак сăн ӳкерчĕкре Çĕньял-Покровскинчи тин çеç йĕркеленнĕ «Çĕньял» артелĕн членĕсем пуху ирттернĕ самант сăнланнă. Сĕтел тавра тирпейлĕ тумланнă çамрăк арçынсем лараççĕ. Районтан килнисем те пур пулас. Шур сухаллă арçын сăмах калать. Сулахайра, арçын ача çумĕнче лараканни – Панфил Ефремов учитель. Хăй çырса хăварнă тăрăх, вăл чи малтан колхоза кĕнĕ. Протокол çыраканни, ахăртнех, Иван Кумальков. Ăна колхоз председательне суйланă. Сĕтел çинчи краççын лампийĕ, чернил кĕленчи, чернил типĕтмелли пресс-промокашка, хут листисем ун чухнехи пурнăça сăнлаççĕ.**

**ТАМАРА ВЕРЕНДЕЕВА, ÇĔНЬЯЛ-ПОКРОВСКИ**



• ТĔЛ ПУЛУ

## Çавах хăйĕн ĕмĕтне пурнăçланă


Р. Грачева

Октябрь вĕçĕнче Ишекри таврапĕлӳ музейĕнче «Ӳнер каçĕ» акци шучĕпе Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисткипе, Мăн Маркара çуралса ӳснĕ Рена Ивановна Грачевăпа (хĕр чухнехи хушамачĕ Кириллова) ăшă тĕл пулу иртрĕ. Унта вырăнти халăх тата шкулта вĕренекенсем пуçтарăнчĕç. Рена Ивановна хăйĕн ачалăхĕ, шкул çулĕсем, ют çĕршыври гастрольсем çинчен каласа кăтартрĕ. Николай Андреев аккомпониатор пулăшнипе хăйĕн çепĕç сассипе куракансене тыткăнларĕ, юррисене шăрантарчĕ. Пилĕк çулта чухнех хĕр ача артистка пулма ĕмĕтленнĕ. Вăл амăшне балет ăсталăхне вĕренме Санкт-Петербурга яма ыйтнă, анчах та Клавдия Петровна хĕрне аякка яма килĕшмен. Мăн Маркари, унтан Ишекри шкулсенче вĕренсе тухсан Рена Грачева Вăрнарти ветеринари техникумне çул тытать. Шкулта ăна биологи тата истори предмечĕсем килĕшнĕ. Мăшăрланса икĕ хĕр çуратсан та Рена Ивановнăн артистка пулас ĕмĕчĕ пуçран тухмасть, вăл Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищине çул тытать. Икĕ ачапа вĕренме йывăр пулать тесе ăна илесшĕнех пулман. Документсем патне кайсан хăй вĕренме кĕни çинчен пĕлсен икĕ ача амăшĕ чунтан савăнать. Паллах, çăмăлах пулман ăна: ачисем пĕчĕк, вĕренме ялтан хулана çӳренĕ. Çапах та училищĕне ăнăçлă пĕтерет Мăн Марка хĕрĕ.

Рена Ивановна 28 çул Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕнче ĕçленĕ. Халĕ, тивĕçлĕ канура пулсан та Мăн Марка клубĕнче заведующинче тăрăшать. 1999 çулта ăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки» ят панă. Унăн Хисеп тата Тав хучĕсем чылай. «Чăваш юрри-95» конкурсра вăл «Хаклă тус-тăван» юрăпа çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

Сумлă хăнана музей ертӳçи Екатерина Смирнова асăнмалăх парнепе тата чечек çыххипе чысларĕ. Рена Ивановна хăй те музее чылай экспонат парнелерĕ. Ман шухăшăмпа, музейра Ишек тăрăхĕн чысне çӳле çĕклекен çинчен кĕтес пулмаллах.

**ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА, МĂН МАРКА**

ТЕ сĕнет

## Кино курма – музея

**Ноябрĕн 13-18-мĕшĕсенче Кӳкеçри «Бичурин тата хальхи самана» музей «Первозданная Россия» экологи кинофестивалĕн фильмĕсене кăтартмалли площадка пулса тăрать.**

Асăннă фестиваль Чăваш Республикинче виççĕмĕш хут иртет. Кинофорума Раççейĕн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕ тата Вырăс географи обществи йĕркелет. «Чăвашкино» патшалăх киностудийĕ тата Чăваш Республикин электронлă документаци архивĕ фестивалĕн Чăваш Енри партнерĕ пулать. Экологи кинофестивалĕн программи çапларах: ноябрĕн 16-мĕшĕнче – «Хабургаев в натуре: Чей нос лучше?», «Хабургаев в натуре: Степные сони», ноябрĕн 17-мĕшĕнче – «Хабургаев в натуре: Маленький гений большого подкопа», «Хабургаев в натуре: Повелитель колец», ноябрĕн 18-мĕшĕнче – «Хабургаев в натуре: Антилопа с хоботом» телепроект презентацийĕсем иртеççĕ. Фильм курма килес текенсенчен заявкăсене 2-51-22 номерпе йышăнаççĕ, билет хакĕ – 20 тенкĕ.

# Шăмăшри «Чăваш Шишкинĕ»

• КУРАВ

**Музейри урок шкулти пĕлĕве çирĕплетме тата анлăлатма май пани иккĕленӳсĕр. Çакăн евĕр занятисем çамрăксене музейсене тата ытти культура учрежденийĕсене çӳреме хăнăхтарнипе те паха. Кӳкеçри 1-мĕш шкулти 10-мĕш класс ачисем те А.Ю Крылова учительницăпа тĕнчери ӳнер культурин предмечĕн черетлĕ темипе парта хушшинче мар, «Бичурин тата хальхи самана» музейра паллашнă.**


ШУТА ИЛМЕ

**Кӳкеçри «Бичурин тата хальхи самана» музейра Михаил Егоровăн 12 картини, 11 набросокĕ, сăн ӳкерчĕксем, документсем упранаççĕ. Курав декабрĕн 5-мĕшĕччен ĕçлет.**

Музей фондчĕн управçи Оксана Ижедерова шкул ачисене Шупашкар районĕнче çуралса ӳснĕ художниксен пурнăçĕпе пултарулăхĕ тата вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен презентаци урлă каласа панă. «Ан васкăр, тăхтăр-ха», – тенĕ шкул ачисем кашни ӳнерçĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлме тăрăшса. Çак кунсенче музейра ентешĕн Михаил Егоровăн куравĕ уçăлнă май вĕренекенсем унăн биографийĕпе, картинисемпе тĕплĕнрех паллашнă. Музей фойинче «Любил природу безоглядно» сăн ӳкерчĕксен куравĕ ĕçлет. Курав залĕнче вара художникăн пейзажĕсем тыткăна илеççĕ. Картинăсене унăн мăшăрĕ, халăх тĕррипе тата эрешлесе тĕрлессипе ăстаçă, «Учимся вышивать» кĕнеке авторĕ Альберта Анцыгина 2006 çулта парнеленĕ. Хăй вырăс пулсан та чăваш тĕррин вăрттăнлăхĕсене пĕлсе вĕсене чăвашсене алла илме пулăшакан кĕнеке кăларнă.

Михаил Егоров 85 çул каялла Шăмăш салинче колхозник çемйинче çуралнă. Чирлĕ ашшĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленсен тепĕр çулталăкран пурнăçран уйрăлса кайнă, çапах та ывăлне ĕмĕтне пурнăçлама – ӳнерçĕ пулма пиллесе хăварнă. 15 çулти арçын ача Шупашкарти ӳнер училищине экзамен этючĕсене ӳкерме темиçе тĕслĕ кăранташпа кăна пынă. «Пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕтĕмĕшле архитектура сăн-сăпачĕ» черченийĕ тата опытпа ылмашăнни» диплом ĕçне вăл «пиллĕк» паллăлăх хӳтĕленĕ. Пĕлӳ илнĕ хыççăн çамрăк Красноярск крайĕнчи Çӳрçĕр халăхĕсен Игарски педучилищине направлениле ĕçлеме кайнă. Пушă вăхăтра классиксен кĕнекисене алăран яман, çӳрçĕр тундрăна тата унти çынсене – якут-сахасене ӳкернĕ. Çӳрçĕрти сивĕ хĕл илемĕ, уçă кăмăллă тата тараватлă çӳрçĕр çыннисем тыткăнланă ăна, çапах та тăван кĕтес яланах чĕрере пулнă. Çĕршыв умĕнчи сăваплă тивĕçе татнă хыççăн мĕн виличчен (1958-1991 çç.) Михаил Егорович РСФСР-ăн художество фончĕн чăваш пултарулăх-производство мастерскойĕсенче ĕçленĕ.

Художник пейзаж – ытларах анлă Атăл тата чăваш юманĕсем – ӳкерме юратнă. Ĕçтешĕсем ăна шӳтлесе Егоров-Волжский тесе чĕннĕ, курава килекенсем вара – «чăваш Шишкинĕ». Михаил Егорович Атăл леш енчи таса çут çанталăка, унăн вăрманĕсене, пĕве-кӳллине сăнланă. Халĕ унăн картинисем çинчи Атăл хĕрринчи таса çут çанталăк вырăнĕсем пачах урăх сăнлă, хăшĕ-пĕрне тупаймăн та. Çавăнпа Михаил Егоровăн картинисем историллĕ, документаллă тесен те йăнăш маррине палăртать Оксана Ижедерова. Михаил Егорович çут çанталăка нимрен ытла хисепленĕ. Милĕк хуçма кайсан та кашни йывăç çинчен пĕр туратран ытлашши хуçман иккен. «Черчен чунлă çын», – тет ун çинчен музей фончĕн управçи.

Ӳнерçĕ юманлăха та ӳкерме юратнă. Шухăшласан, юман – йывăç кăна теме пулать. Анчах çук. Ӳнерçĕн вăл тĕрлĕрен: мăнаçлă, симĕс... Унăн юратнă юманĕ те пулнине ĕнентерет Оксана Николаевна. Ăна вăл çут çанталăкăн тĕрлĕ вăхăтĕнче сăнлама юратнă иккен. Çакăн пек этюдсенчен пĕри – «Мой любимый дуб в августе» картина. Шартлама сивĕсенче те Атăл леш енне юр ашса сивĕрен хăрамасăр çут çанталăка сăнлама çӳренĕ художник.

Пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăça çирĕплетес ĕçе хутшăннăшăн вăл Советăн мирлĕ фончĕн хисеплĕ медальне тивĕçнĕ. Акă, сăмахран, 1982 çулта вăл хăйĕн картинисене сутса тунă 350 тенкĕ укçана фонта куçарса панă. Шкул ачисем ентешĕн наградисене хăйсен куçĕпе курма, тытса пăхма пултарнă.

Михаил Егоров картинисен тĕп пайĕ Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн фондчĕсенче упранать. Унăн пейзажĕсем Германири, Италири уйрăм çынсен коллекцийĕсенче те пур.

**АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

# Çул çӳрев кĕнеки кун çути курчĕ

• ÇĔНĔ КĔНЕКЕ


А. Тихонова сăн ӳкерчĕкĕ

**Иртнĕ кĕçнерникун районти тĕп библиотекăра «Тăван Ен» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕн Николай Смирновăн (Шумер) «Хĕвеллĕ Казахстан» кĕнеке презентацийĕ иртрĕ. Хăнасем – Вăрман-Çĕктер ял тăрăх пуçлăхĕ Олег Ерманов, Раиса Сарпи, Альбина Юрату чăваш поэтессисем тата Марина Морская художник, Юрий Чутай çыравçă, «Тăван Ен» хаçат редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ Виктория Вышинская – кĕнекене хак пачĕç.**

2017 çулхи çулла чăваш делегацийĕн йышĕнче Казахстан çĕрĕ тăрăх çул çӳреве тухни Николай Васильевича кĕнеке кăларма хистенĕ. 68 страницăран тăракан кăларăма чăвашла тата вырăсла очерксем, тĕрленчĕксем, сăвăсем кĕнĕ. Казахстанри Х.А. Ясави ячĕллĕ халăхсен хушшинчи казахпа туркă университетне, Туркестан хулин олимп комплексне, Х.А. Ясави архитектура комплексне çитсе курнине автор кĕнекере çырса кăтартнă. Кунсăр пуçне хăй ӳкернĕ 62 сăн ӳкерчĕк те пичетленнĕ унта. Николай Смирнов иккĕмĕш кĕнекине Шупашкар районĕ 90 çул тултарнине халаллани çинчен пĕлтерчĕ. «Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн ертӳçи Олег Цыпленков ертсе пынипе çул çӳреве тухрăмăр. Казахстана çитиччен малтан Оренбург тăрăхĕнче пултăмăр. Пирĕнпе пĕрле пултарулăх ушкăнĕсем те пулчĕç. Кĕнекере çул çӳрев мĕнле иртнине, çĕнĕ туссемпе паллашнине çырса кăтартрăм. Çул çӳрев картти – Шупашкартан пуçласа Казахстанри Туркестан таран. Пĕр енне 2800 км каймалла. Çӳл çӳреве пысăк йышпа тухнине палăртмалла. 43 çынтан 7-шĕ Шупашкар районĕнчен пулчĕç: Николай Фомиряков, эпĕ тата «Телей» пултарулăх ушкăнĕн хĕрĕсем. Кĕнеке хуплашки çинче Туркестанри пĕлтерĕшлĕ вырăн-палăка сăнланă. Ку хула сцени çинчи концерта пирĕн пултарулăх ушкăнĕсем те хутшăнчĕç. Тепĕр кун Х.А. Ясави ячĕллĕ халăхсен хушшинчи казахпа туркă университетĕнче пултăмăр. Унта чăвашсем те вĕреннине пĕлтĕмĕр...» – çул çӳрев çинчен каласа памалли пайтах кĕнеке авторĕн.

Раиса Сарпи автора кĕнеке тухнипе саламланă май Казахстан çĕрĕ унăн пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăннине, пĕтĕм тĕнчери Тĕрĕк поэчĕсен курунттайне хутшăннăранпа унăн ятне пĕлме пуçланине палăртрĕ вăл. «Салам-алейкум: Казахстан!» сăвва хаваслă кăмăл-туйăмпа вуласа пачĕ. Николай Смирновпа паллашнине те аса илчĕ поэтесса. «Виçĕ çул каялла пĕлĕшĕн парфюмери лавккинчен кĕнеке лавкки туса хутăм. Пăхатăп, кун сиктерсе тенĕ пекех пĕр маттур çӳллĕ каччă чăваш кĕнекисене пăхма килет, çĕннисене ыйтать. Кĕнеке юратакансене хисепленĕ май унпа калаçса кайрăм, çапла туслашрăмăр та», – тет Раиса Сарпи. Кĕнекене «пиллĕк» кăна мар, «улттă» паллă та лартса хаклани çинчен пĕлтерчĕ чăваш поэтесси.

«Кĕнеке вăл – литература палăкĕ», – терĕ Юрий Чутай çыравçă. Кĕнекере çырса хăварнă йĕркесем пулас ăрусемшĕн те юлнине, авторăн ятне вилĕмсĕрлетнине палăртрĕ вăл. Альбина Юрату та кĕнекене лайăх енчен кăна хакларĕ. Николай Шумерпа «Тăван Ен» хаçат паллаштарни çинчен аса илчĕ вăл. Казахстанра пулса курнă, асра юлнă вырăнсем çинчен каласа памасăр чăтаймарĕ.

Вăрман-Çĕктер ял тăрăх пуçлăхĕ Олег Ерманов Николай Смирнов ял тăрăх пурнăçне хастар хутшăннине палăртрĕ. «Çак маттур каччă пирĕн ял тăрăхĕн депутачĕн тивĕçĕсене пурнăçланисĕр пуçне почтăра хаçат та салатать. Ял тăрăхĕн кăна мар, чăн-чăн чăваш маттурĕ», – çакăн пек сăмахсене тивĕçрĕ кĕнеке авторĕ унтан.

Виктория Вышинская хаçатăн штатра тăман корреспондентне редакципе тачă çыхăну тытнăшăн тав турĕ. «Сирĕн статьясăр пĕр номер та тухмасть. Çакăн пек юлташсем пулнишĕн редакци савăнать кăна. Пĕлтĕр Николай Васильевич Крым таврашĕнче пулса курни çинчен çырса тĕлĕнтерчĕ пире, кăçал акă чăваш саламне Казахстана илсе çитерчĕ», – терĕ вăл ЧР Журналистсен союзĕн членĕпе çыхăну малашне çирĕпленсе кăна пырасса шанса. Çул çӳреврен таврăннă хыççăн автор очеркĕсене «Тăван Ен» хаçат республикăри ытти хаçатсенчен чи малтан пичетлерĕ.

«Телей» фольклор ушкăнĕ çĕнĕ кĕнекешĕн савăннине илемлĕ юрри-кĕвви урлă палăртрĕ.

**МИЛЕНА СЕРГЕЕВА**

Тс ТЕЛЕСЕРИАЛ
ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ
Д ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ
М Мультфильм

## Понедельник 20 ноября

### 1 КАНАЛ
5.00 Доброе утро
9.00, 12.00, 15.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15, 4.10 Контрольная закупка
9.50 Жить здорово! 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 17.00, 1.20 Время покажет 16+
15.15 Давай поженимся! 16+
16.00 Мужское / Женское 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 На самом деле 16+
19.50 Пусть говорят 16+
21.00 Время
21.30 КРЫЛЬЯ ИМПЕРИИ 16+
23.35 Вечерний Ургант 16+
0.00 Познер 16+
2.25, 3.05 ЗУБНАЯ ФЕЯ 2 12+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 О самом главном 12+
11.40, 14.40, 17.40, 20.45 Вести. Местное время
12.00 Судьба человека с Борисом Корчевниковым 12+
13.00, 19.00 60 Минут 12+
14.55 МОРОЗОВА 12+
18.00 Андрей Малахов. Прямой эфир 16+
21.00 ДОКТОР РИХТЕР 16+
23.15 Вечер с Владимиром Соловьёвым 12+
1.50 ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ! 12+

### ЧТВ
5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро
9.00 Пирĕн фондран. Тани Юн. Видеофильм. 2 пай
9.35-9.55 Вести. Интервью
11.40-12.00 Вести-Чăваш ен
14.40-14.55 Вести-Чувашия
17.40-18.00 Вести-Чăваш ен
20.45-21.00 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00, 14.00 Хыпарçăсем 12+
7.00 Будильники 12+
9.00 Д Все даст земля 12+
10.00, 15.40 Диана и звезды чувашской эстрады. Концерт 12+
13.00, 18.30 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ
13.05, 13.35 Я люблю Чувашию 6+
13.30, 19.30 Республика. Информационная программа
15.00, 23.00 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ 12+
15.05 Танцы без границ 12+
15.30, 23.30 Республика. Информационная программа 12+
18.00, 2.30 Республика в деталях 12+
19.00, 0.30 Кил ăшши 12+
20.00, 3.00 Экономика в деталях 12+
20.35, 3.05 Акилбупсер 6+
21.00, 4.00 Юрату пулсассăн чĕрере Камит 16+
0.00, 3.30 IT не обойти 12+
1.00 Д Вадим Матросов 16+
2.00 Жемчужина 12+

### НТВ
5.00, 6.05 АДВОКАТ 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 Деловое утро НТВ 12+
9.00, 10.25 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
11.20 ПОДОЗРЕВАЮТСЯ ВСЕ 16+
12.00 СВИДЕТЕЛИ 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00, 16.30 Место встречи
17.00 Специальный выпуск с Вадимом Такменевым 16+
18.00 УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ 16+
19.40 МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+
23.35 Итоги дня
0.05 Поздняков 16+
0.15 АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР 16+
1.00 Место встречи 16+
2.55 Малая земля 16+
3.55 Поедем, поедим!

## Вторник 21 ноября

### 1 КАНАЛ
5.00 Доброе утро
9.00, 12.00, 15.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.50 Жить здорово! 12+
10.55, 3.40 Модный приговор
12.15, 17.00, 0.35 Время покажет 16+
15.15 Давай поженимся! 16+
16.00 Мужское / Женское 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 На самом деле 16+
19.50 Пусть говорят 16+
21.00 Время
21.35 КРЫЛЬЯ ИМПЕРИИ 16+
23.45 Вечерний Ургант 16+
1.35, 3.05 РУБИ СПАРКС 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 О самом главном 12+
11.40, 14.40, 17.40, 20.45 Вести. Местное время
12.00 Судьба человека с Борисом Корчевниковым 12+
13.00, 19.00 60 Минут 12+
14.55 МОРОЗОВА 12+
18.00 Андрей Малахов. Прямой эфир 16+
21.00 ДОКТОР РИХТЕР 16+
23.15 Вечер с Владимиром Соловьёвым 12+
1.50 ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ! 12+

### ЧТВ
5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро
9.00 Ирхи тĕпел. Премьера
9.40-9.55 Доступная среда
11.40-12.00 Вести-Чăваш ен
14.40-14.55 Вести-Чувашия
17.40-18.00 Вести-Чăваш ен
20.45-21.00 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00, 15.00, 23.00 Республика Хыпарсен кăларăмĕ 12+
6.30, 15.30, 23.30 Республика Информационная программа 12+
7.00 Ирхи салам 12+
9.00 Республика в деталях 12+
9.30, 13.05 Экономика в деталях 12+
9.35, 13.35 Акилбупсер 6+
10.00 Юратсан юрлас килет. Камит 12+
12.00 IT не обойти 12+
12.30 Кил ăшши 12+
13.00, 18.30 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ
13.30, 19.30 Республика. Информационная программа
14.00 Д Вадим Матросов 16+
15.05 Жемчужина 12+
15.35 Юрату пулсассăн чĕрере. Камит 16+
19.00, 2.00 Танцы без границ 12+
20.00, 3.00 Вектор комфорта 12+
20.10 Правовое поле 12+
20.30 Открой свое дело 12+
21.00, 0.00, 4.30 Иксĕлми çăлкуçсем. Гала-концерт 12+
1.00 Д Яков Серебрянский 16+
2.30 Это мы. Программа ТРК Башкортостан 6+
3.40 Правовое поле 12+
4.00 Открой свое дело 12+

### НТВ
5.00, 6.05 АДВОКАТ 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 Деловое утро НТВ 12+
9.00, 10.25 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
11.20 ПОДОЗРЕВАЮТСЯ ВСЕ 16+
12.00 СВИДЕТЕЛИ 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00, 16.30 Место встречи
17.00 Специальный выпуск с Вадимом Такменевым 16+
18.00 УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ 16+
19.40 МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+
23.35 Итоги дня
0.05 АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР 16+
0.40 Место встречи 16+

## Среда 22 ноября

### 1 КАНАЛ
5.00 Доброе утро
9.00, 12.00, 15.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.50 Жить здорово! 12+
10.55, 3.55 Модный приговор
12.15, 17.00, 0.35 Время покажет 16+
15.15 Давай поженимся! 16+
16.00 Мужское / Женское 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 На самом деле 16+
19.50 Пусть говорят 16+
21.00 Время
21.35 КРЫЛЬЯ ИМПЕРИИ 16+
23.45 Вечерний Ургант 16+
1.35, 3.05 НЕМНОЖКО ЖЕНАТЫ 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 О самом главном 12+
11.40, 14.40, 17.40, 20.45 Вести. Местное время
12.00 Судьба человека с Борисом Корчевниковым 12+
13.00, 19.00 60 Минут 12+
14.55 МОРОЗОВА 12+
18.00 Андрей Малахов. Прямой эфир 16+
21.00 ДОКТОР РИХТЕР 16+
23.15 Вечер с Владимиром Соловьёвым 12+
1.50 ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ! 12+

### ЧТВ
5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро
9.00 Пирĕн фондран. Чăваш драма театрĕ 100 çул тултарнă тĕле. Ӳнер тĕнчи. С. Иванов
9.20-9.55 Секреты здоровья и красоты
11.40-12.00 Вести-Чăваш ен
14.40-14.55 Вести-Чувашия
17.40-18.00 Вести-Чăваш ен
20.45-21.00 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00, 15.00, 23.00 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ 12+
6.30, 15.30, 23.30 Республика. Информационная программа 12+
7.00 Будильники 12+
9.00, 13.35 Вектор комфорта 12+
9.10, 15.05 Правовое поле 12+
9.30, 14.30 Открой свое дело 12+
10.00, 15.35 Иксĕлми çăлкуçсем. Гала-концерт 12+
13.00, 18.30 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ
13.05, 20.15, 3.15 Я люблю Чувашию 12+
13.30, 19.30 Республика. Информационная программа
14.00 Это мы. Программа ТРК Башкортостан 6+
18.00, 0.00 Республика в деталях 12+
19.00, 0.30 Литература тĕпелĕ 12+
20.00, 3.00 СпортСити 12+
20.30, 3.30 Жемчужина 12+
21.00, 4.00 Ĕмĕр иртет, кун юлать. Илемлĕ фильм 16+
1.00 Эх, юррăм, янăра! 12+
1.30 Большое сердце 12+
2.00 НаоБУМ 12+

### НТВ
5.00, 6.05 АДВОКАТ 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 Деловое утро НТВ 12+
9.00, 10.25 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
11.20 ПОДОЗРЕВАЮТСЯ ВСЕ 16+
12.00 СВИДЕТЕЛИ 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00, 16.30 Место встречи
17.00 Специальный выпуск с Вадимом Такменевым 16+
18.00 УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ 16+
19.40 МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+
23.35 Итоги дня
0.05 АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР 16+
0.40 Место встречи 16+
2.40 Дачный ответ

## Четверг 23 ноября

### 1 КАНАЛ
5.00 Доброе утро
9.00, 12.00, 15.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.50 Жить здорово! 12+
10.55, 3.45 Модный приговор
12.15, 17.00 Время покажет 16+
15.15 Давай поженимся! 16+
16.00 Мужское / Женское 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 На самом деле 16+
19.50 Пусть говорят 16+
21.00 Время
21.35 КРЫЛЬЯ ИМПЕРИИ 16+
23.45 Вечерний Ургант 16+
0.35 На ночь глядя 16+
1.30, 3.05 МИЛЛИОН СПОСОБОВ ПОТЕРЯТЬ ГОЛОВУ 18+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 О самом главном 12+
11.40, 14.40, 17.40, 20.45 Вести. Местное время
12.00 Судьба человека с Борисом Корчевниковым 12+
13.00, 19.00 60 Минут 12+
14.55 МОРОЗОВА 12+
18.00 Андрей Малахов. Прямой эфир 16+
21.00 ДОКТОР РИХТЕР 16+
23.15 Вечер с Владимиром Соловьёвым 12+
1.50 ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ! 12+

### ЧТВ
5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро
9.00 Алран кайми
9.15 Аса ил-ха, салтак
9.35-9.55 85 лет симфоническому театру ЧР
11.40-12.00 Вести-Чăваш ен
14.40-14.55 Вести-Чувашия
17.40-18.00 Вести-Чăваш ен
20.45-21.00 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00, 15.00, 23.00 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ 12+
6.30, 15.30, 23.30 Республика. Информационная программа 12+
7.00 Ирхи салам 12+
9.00 Республика в деталях 12+
9.30, 13.35 СпортСити 12+
9.45, 13.05, 15.05 Я люблю Чувашию 12+
10.00, 15.35 Ĕмĕр иртет, кун юлать. Илемлĕ фильм 16+
12.00 Жемчужина 12+
12.30, 14.30 Литература тĕпелĕ 12+
13.00, 18.30 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ
13.30, 19.30 Республика. Информационная программа
14.00 Большое сердце 12+
18.00 НаоБУМ 12+
19.00, 0.00 Правительственная связь 12+
20.00 Местное самоуправление 12+
20.30 Ротаци 12+
21.00, 3.00 Юрăсен юрри. Концерт 6+
0.30 День перемен 12+
1.00 Д Сергей Федосеев 16+
2.00 Аван-и 12+

### НТВ
5.00, 6.05 АДВОКАТ 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 Деловое утро НТВ 12+
9.00, 10.25 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
11.20 ПОДОЗРЕВАЮТСЯ ВСЕ 16+
12.00 СВИДЕТЕЛИ 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00, 16.30 Место встречи
17.00 Специальный выпуск с Вадимом Такменевым 16+
18.00 УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ 16+
19.40 МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+
23.35 Итоги дня
0.05 АГЕНТСТВО СКРЫТЫХ КАМЕР 16+
0.40 Место встречи 16+

## Пятница 24 ноября

### 1 КАНАЛ
5.00 Доброе утро
9.00, 12.00, 15.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.50 Жить здорово! 12+
10.55, 4.15 Модный приговор
12.15, 17.00 Время покажет 16+
15.15 Давай поженимся! 16+
16.00 Мужское / Женское 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 Человек и закон 16+
19.55 Поле чудес 16+
21.00 Время
21.30 ГОЛОС 12+
23.30 Вечерний Ургант 16+
0.25 Городские пижоны Дэвид Гилмор: Широкие горизонты 16+
1.50 НЕ ПОЙМАН – НЕ ВОР 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 О самом главном 12+
11.40, 14.40, 17.40, 20.45 Вести. Местное время
12.00 Судьба человека с Борисом Корчевниковым 12+
13.00, 19.00 60 Минут 12+
14.55 МОРОЗОВА 12+
18.00 Андрей Малахов. Прямой эфир 16+
21.00 Юморина 12+
23.20 КРИВОЕ ЗЕРКАЛО ДУШИ 12+

### ЧТВ
5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро
9.00 Мастер спорта
9.20-9.55 Ӳнер тĕнчи. Чăваш драма театрĕн режиссерĕ Н. Сергеева
11.40-12.00 Вести-ПФО
14.40-14.55 Вести-Чувашия
17.40-18.00 Вести-Чăваш ен
20.45-21.00 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00, 15.00 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ 12+
6.30, 15.30, 0.00 Республика. Информационная программа 12+
7.00 Будильники 12+
9.00, 13.35 Местное самоуправление 12+
9.30, 14.00 Ротаци 12+
10.00, 15.35 Юрăсен юрри. Концерт 6+
13.00 Республика. Хыпарсен кăларăмĕ
13.05 Я люблю Чувашию 12+
13.30, 19.30 Республика. Информационная программа
14.30 Аван-и 12+
15.05 Çитмĕл те çиччĕ 12+
18.30, 23.00 Эрне. Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
20.00, 3.00 Бухты барахты 6+
20.30, 3.30 В гостях как дома 12+
21.00, 0.30, 4.00 Юрă – халăх чунĕ. Концерт 12+
1.30 Туслăх йывăçĕ 12+
2.00 Время вкуса 12+

### НТВ
5.00, 6.05 АДВОКАТ 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 Деловое утро НТВ 12+
9.00, 10.25 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
11.20 ПОДОЗРЕВАЮТСЯ ВСЕ 16+
12.00 СВИДЕТЕЛИ 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Место встречи
16.30 ЧП. Расследование 16+
17.00 УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ 16+
19.40 МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+
23.35 Захар Прилепин. Уроки русского 12+
0.05 Мы и наука. Наука и мы 12+
1.05 Место встречи 16+
3.05 ВЕРСИЯ 16+

## Суббота 25 ноября

### 1 КАНАЛ
5.15 Контрольная закупка
6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
6.10 ДЕТИ ДОН КИХОТА
8.00 Играй, гармонь любимая!
8.45 Смешарики. Новые приключения
9.00 Умницы и умники 12+
9.45 Слово пастыря
10.15 Летучий отряд
11.00 Владимир Конкин. Наказания без вины не бывает! 12+
12.15 Идеальный ремонт
13.20, 15.10 ПОДЕЛИСЬ СЧАСТЬЕМ СВОИМ 16+
18.00 Вечерние новости
18.15 Кто хочет стать миллионером?
19.50, 21.20 Сегодня вечером 16+
21.00 Время
23.00 Прожекторперисхилтон 16+
23.35 ФРЕННИ 16+
1.20 БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ 16+
3.25 ДЕРЕВО ДЖОШУА 16+

### РОССИЯ 1
4.40 СРОЧНО В НОМЕР!-2 12+
6.35 М Маша и Медведь
7.10 Живые истории
8.00, 11.20 Вести. Местное время
8.20 Россия. Местное время 12+
9.20 Сто к одному
10.10 Пятеро на одного
11.00, 14.00 Вести
11.40 Юмор! Юмор! Юмор!!! 16+
14.20 НАВАЖДЕНИЕ 12+
18.40 Стена 12+
20.00 Вести в субботу
21.00 КАЧЕЛИ 12+
1.00 РОДНЯ
3.05 СЛЕДСТВИЕ ВЕДУТ ЗНАТОКИ

### ЧТВ
8.00-8.20 Вести-Чăваш ен
8.20-9.20 Юратнăран
11.20-11.40 Вести-Чувашия

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00 Эрне. Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
7.00 Республика. Информационная программа 12+
7.30 Субботнее утро 12+
9.30, 17.00 Бухты барахты 6+
10.00, 17.30 В гостях как дома 12+
10.30, 3.00 Время вкуса 12+
11.00 Туслăх йывăçĕ 12+
11.30, 18.30, 5.30 Каçхи тĕл пулу 12+
12.00, 1.30 Пĕррехинче 20 çул иртсен. Чăвашла куçарнă фильм 12+
13.30 Юрă – халăх чунĕ. Концерт 12+
19.00 Ырă кăмăлпа 12+
19.30, 5.00 След в истории 12+
20.00, 3.30 Мысли вслух 12+
21.00, 4.30 Танцы без границ 12+
21.30 Песни России 12+

### НТВ
5.00 ЧП. Расследование 16+
5.35 Звезды сошлись 16+
7.25 Смотр
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 НОВЫЙ ДОМ
8.50 Пора в отпуск 16+
9.35 Готовим с Алексеем Зиминым
10.20 Главная дорога 16+
11.00 Еда живая и мертвая 12+
12.00 Квартирный вопрос
13.05 НашПотребНадзор 16+
14.10 Поедем, поедим!
15.05 Своя игра
16.20 Однажды... 16+
17.00 Секрет на миллион. Виктор Салтыков 16+
19.00 Центральное телевидение С Вадимом Такменевым
20.00 Жди меня 12+
21.00 Ты супер! Танцы 6+
23.40 Международная пилорама с Тиграном Кеосаяном 18+
0.40 Квартирник НТВ у Маргулиса Градусы 16+
1.50 ПУТЬ САМЦА 18+
4.00 ВЕРСИЯ 16+

## Воскресенье 26 ноября

### 1 КАНАЛ
5.50 ДОБРОВОЛЬЦЫ 12+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Добровольцы 12+
7.50 Смешарики. ПИН-код
8.00 Часовой 12+
8.35 Здоровье 16+
9.40 Непутевые заметки 12+
10.15 Честное слово
11.10 Смак 12+
12.15 Теория заговора 16+
13.00 Творческий вечер Константина Меладзе
14.35 К юбилею актера. Михаил Ульянов. Маршал советского кино 12+
15.35 ВОРОШИЛОВСКИЙ СТРЕЛОК 12+
17.30 Русский ниндзя
19.30 Лучше всех!
21.00 Воскресное Время
22.30 Что? Где? Когда? Зимняя серия игр
23.40 Международный музыкальный фестиваль Белые ночи Санкт-Петербурга 12+
1.30 ПЛЯЖ 16+
3.40 Модный приговор

### РОССИЯ 1
4.50 СРОЧНО В НОМЕР!-2 12+
6.45, 3.05 Сам себе режиссёр
7.35 Смехопанорама
8.05 Утренняя почта
8.45 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
9.25 Сто к одному
10.10 Когда все дома с Тимуром Кизяковым
11.00 Вести
11.20 Смеяться разрешается
13.00 ПРИВЕТ ОТ АИСТА 12+
17.00 Кастинг Всероссийского открытого телевизионного конкурса юных талантов Синяя птица
18.00 Всероссийский открытый телевизионный конкурс юных талантов Синяя птица
20.00 Вести недели
22.00 Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым 12+
0.30 Действующие лица с Наилей Аскер-заде. Рамзан Кадыров 12+
1.25 СЛЕДСТВИЕ ВЕДУТ ЗНАТОКИ
3.55 Смехопанорама

### ЧТВ
8.45-9.25 Вести-Чувашия. События недели

### НТРК ЧУВАШИИ
6.00 Песни России 12+
9.00 Эрне. Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
9.50 Республика. Столичные новости 12+
10.00 Ырă кăмăлпа 12+
10.30, 16.00, 19.30, 0.00 След в истории 12+
11.00, 16.30 Мысли вслух 12+
12.00, 17.30, 2.30 Танцы без границ 12+
12.30, 15.30, 23.30 Каçхи тĕл пулу 12+
13.00 Это мы. Программа ТРК Башкортостан 6+
13.30, 0.30 Попугайлă хĕрарăм. Чăвашла куçарнă фильм 12+
18.00 Д Михаил Маклярский 16+
19.00 Жемчужина 12+
20.00 Яш чух, çамрăк чух! 12+
20.30 Кил ăшши 12+
21.00, 3.00 Для тебя! Концерт ансамбля Сеспель 12+

### НТВ
5.00 БАРС И ЛЯЛЬКА 12+
7.00 Центральное телевидение 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 Их нравы
8.40 Устами младенца
9.25 Едим дома
10.20 Первая передача 16+
11.05 Чудо техники 12+
12.00 Дачный ответ
13.05 Малая земля 16+
14.00 У нас выигрывают! Лотерейное шоу 12+
15.05 Своя игра
16.20 Следствие вели... 16+
18.00 Новые русские сенсации 16+
19.00 Итоги недели с Ирадой Зейналовой
20.10 Ты не поверишь! 16+
21.10 Звезды сошлись 16+
23.00 БЕССТЫДНИКИ 18+
0.55 ЖЕСТОКАЯ ЛЮБОВЬ 18+

ЦИФРӐСЕН ЧӖЛХИПЕ

2018 ҫултан И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн пӗрремӗш курсӗн

**11 студенчӗ**

физикӑпа математикӑна вӗренес ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн ЧР Пуҫлӑхӗн йышӑнӑвӗпе уйӑхсерен стипенди илсе тӑрӗ.

**2012 ҪУЛТА ЧӐВАШ ЕН ПУҪЛӐХӖ МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ РЕСПУБЛИКӐРА ФИЗИКӐПА МАТЕМАТИКА ПӖЛӖВНЕ ПАРАССИНЕ ВӐЙЛАТМА** тата пултаруллӑ ҫамрӑксене хавхалантарма физикӑпа математика предмечӗсене вӗренес тӗлӗшӗнчи ҫитӗнӳсемшӗн студентсене уйӑхсерен 2 пин тенкӗ стипенди тӳлеме йышӑну турӗ. 2013-2016 ҫулсенче ӑна тивӗҫнӗ 145 ҫынран 138-шӗ И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнче вӗренеҫҫӗ.

Тӗп услови – республика шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксен патшалӑхӑн пӗрлехи экзаменӗнче математика тата физика предмечӗсемпе 70-тен каярах мар балл пухмалла тата регионти вӗренӳ учрежденийӗсенче пӗлӗве тӑсмалла.

ХЫПАР-ХӐНАР

**ҪАР КОМИССАРИАЧӖН СӖНТӖРВӐРРИ ТАТА ШУПАШКАР РАЙОНӖСЕНЧИ** уйрӑмӗ призыв вӑхӑтӗнчи яшсене патшалӑх разведуправленине, Шалти ӗҫсен тытӑмне, тинӗс флотне, сывлӑш десантне йышӑнать. Эрне пуҫламӑшӗнче райадминистрацире иртнӗ канашлура ҫар комиссарӗ Александр Кочуров элитлӑ ҫарсем валли 15 ҫамрӑк кирлине пӗлтерчӗ. Кӗркуннехи тапхӑрта салтак аттине вун иккӗн тӑхӑннӑ та ӗнтӗ. Ҫав вӑхӑтрах призыв комиссине аякран ҫаврӑнса иртеккеннисем те ҫук мар. Ытларах Тутаркасси тата Ишлей ял тӑрӑхӗсенчен. Пурӗ вӗсем ҫиччӗн. Анчах та законпа килӗшӳллӗн вӗсенчен пӗрне те пулсан явап тыттарсанах таркӑнсен шучӗ чакӗ, иккӗленмест Александр Алексеевич.

Ҫак кунсенче Шупашкар тата Сӗнтӗрвӑрри районӗсенчен икӗ яша Президент полкне ӑсатнӑ. Унта салтак тивӗҫне татнӑ пӗр ывӑлне апашсем нумай пулмасть кӗтсе илчӗҫ те ӗнтӗ.

• ТӖЛ ПУЛУ

# Хӑнара – пулас журналистсем



**Ноябрӗн 20-24-мӗшӗсенче ЧР Ӗҫ тата социаллӑ хӳтлӗх министерстви волонтер-профориентаторсен «Эсӗ суйланӑ професси» республика акцине ирттерет.**

Унӑн тӗллевӗ – аслӑ классенче вӗренекенсене професси суйлама пулӑшасси. Акци шайӗнче волонтерсем хӑйсем суйланӑ специальноҫсем ҫинчен каласа параҫҫӗ. «Тӑван Ен» хаҫат редакцийӗ те айккинче юлмӗ. Акцие хутшӑнма районти халӑха ӗҫпе тивӗҫтерекен центра заявка тӑратнӑ та ӗнтӗ вӑл. Иртнӗ эрнере вара Пичет ҫуртӗнче вӑл пулас журналистсене – И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн филологи факультечӗн журналистика уйрӑмӗн студенчӗсене йышӑнчӗ. Хӑнасем хаҫатӑн 85 ҫулхи юбилейӗ тӗлне йӗркеленӗ музей кӗтесӗпе кӑсӑкланчӗҫ, хаҫат вулаканӗсем пирки те пӗлесшӗн пулчӗҫ: мӗнле материалсем кӑмӑллать вӑл, Интернет уҫлӑхӗнче ҫамрӑк аудиторие мӗнпе илӗртмелле. Сайт редакторӗ Елена Губанова журналист профессине суйлани мӗнпе ҫыхӑнни ҫинчен каласа пачӗ.

Студентсене Пичет ҫуртӗнче килӗшнӗ. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ – Олег Студенцов доцент ертсе пынипе редакцие вӗсен тепӗр ушкӑнӗ те ҫитрӗ. Ҫывӑх вӑхӑтрах шкул ачисем валли редакци типографире кӑсӑклӑ курав йӗркелӗ.

• СЫВӐ ПУРНӐҪ

## Тӗнче кубокне курма ҫитетпӗрех



Ҫӗньял-Покровски вӑтам шкулӗн 9-мӗш класс вӗренекенӗ Анна Петрова Чӑваш Ен команди йышӗнче Иван Ярыгин фончӗн парнисемшӗн ирӗклӗ кӗрешӳ енӗпе ҫак кунсенче Смоленскри спорт кермене ӗнче иртекен Пӗтӗм Раҫҫей турнирне хутшӑнать. «Улӑп» спортпа сывлӑх центрӗн тренер-преподавателӗ Юрий Алексеев чи малтанах ирӗклӗ кӗрешӳ секцийӗ Ишлей салинче уҫӑлнине пӗлтерчӗ. Ушкӑнсем йӗркелеме суйлав Ҫӗньял-Покровски шкулӗнче иртнӗ. Кунти физкультура учителӗ Юрий Алексеева пысӑк шанӑҫ кӳрекен Анна Петровӑна сӑнама сӗннӗ. Ҫакӑнтанпа тӑватӑ ҫул иртнӗ – тренер ӑна хатӗрлет. Ун шучӗпе, эрнере виҫҫӗ иртекен занятисем ҫителӗксӗр, ҫитӗнӳшӗн ытларах ҫине тӑмалла. «Декабрьте Шупашкарта Хӗрарӑмсем хушшинче ирӗклӗ майпа иртекен тӗнче кӗрешӗвне курма ҫитсе килетпӗрех. Пирӗн ҫӗршыв ҫакӑн пек ҫӳллӗ шайри ӑмӑртӑва ирттерес тивӗҫе иккӗмӗш хут ҫӗнсе илет», – тет тренер. Шкул вӗренекенӗсенчен Юрий Алексеев ҫавӑн пекех Диана Олаева тата Виктория Манаева шанӑҫ кӳнине палӑртрӗ.

# Ӗмӗр те пӗр теҫетке хыҫа юлчӗ

## Янӑш шкулӗ юбилее хатӗрленет

• ИСТОРИ СУКМАКӖПЕ

*Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 42-мӗш номерте.*

Ачасен йышӗ ӳсме тытӑннӑран 1962 ҫулта Янӑш шкулне 8 ҫул вӗренмелле тӑваҫҫӗ. Аял маччаллӑ, хӗсӗк коридорлӑ ҫурт санитари нормисем ыйтнине тивӗҫтермест – ҫӗнӗ шкул тӑвас ыйту сиксе тухать.

«Прогресс» колхоз председателӗ В.В. Васильев тата шкул директорӗ А.И. Виноградова тӑрӑшнипе часах чултан ҫӗнӗ ҫурт хӑпарма тытӑнать. Вӗрентӳ вучахне май пур хӑвӑртрах хута ярас тесе рабочисемпе пӗрле вӗрентекенсем те, ачасем те тӑрӑшса, ҫанӑ тавӑрса вӑй хураҫҫӗ – кирпӗчсене йӑтаҫҫӗ, строительство ӗҫӗсем хыҫҫӑн юлакан ҫӳп-ҫапа тасатаҫҫӗ. Асӑннӑ ҫурт паян та ларать, унта 2004 ҫулччenex урoксем ирттернӗ. 1965 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнче ҫӗнӗ шкул хӑйӗн алӑкӗсене уҫать.

Ачасене патриотла воспитани парас тӗллевпе Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ ветерансемпе 60-70-мӗш ҫулсенче час-часах тӗл пулусем ирттереҫҫӗ. Пионер кӑвайчӗсене Мамӑш, Хӑймалакасси, Янӑш шкулӗсен вӗренекенӗсем хутшӑнса пултарулӑхӗпе савӑнтараҫҫӗ, спорт ӑмӑртӑвӗсенче вӑй-халне тӗрӗслеҫҫӗ. «Прогресс» колхоз председателӗ В.В. Васильев пуҫарӑвӗпе колхоз членӗсен ачисем 1972 ҫулта экскурсипе Мускава ҫитеҫҫӗ, тепӗр 2 ҫултан – Ленинграда та. Кун пек чыса шкулти чи лайӑх вӗренекенсем тивӗҫеҫҫӗ.

А.И. Виноградова 34 ҫул шкул директорӗнче вӑй хурать. 1981 ҫулта ертӳҫӗ тилхепине тытма С.Г. Герасимова шанаҫҫӗ. Вӑл 6 ҫул ҫак ӗҫре тӑрӑшать. Ҫав вӑхӑтра вӗренекенсене мӗн ачаран ӗҫе хӑнӑхтарас тӗллевпе шкул ҫӗршыври малта пыракан ял хуҫалӑх наукӑпа тӗпчев институчӗсемпе тачӑ ҫыхӑну тытать. 70-мӗш ҫулсенче вырӑс чӗлхипе литература предметне вӗрентекен Е.Д. Андреева тӑрӑшнипе вӗренекенсене часчасах Шупашкара экскурсисене илсе ҫӳрени, тӑван тӑрӑхра велосипедпа тата ҫуран походсене тухни ачасен тавракурӑмне анлӑлатма пулӑшать.

80-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче А.И. Виноградова директорта вӑй хунӑ вӑхӑтра ӗҫленӗ учительсем тивӗҫлӗ канӑва тухаҫҫӗ. Вӗсем вырӑнне хастар та ҫӗнӗлӗхсем патне туртӑнакан ҫамрӑксем – С.Г. Петрова, Л.Ю. Мулякова, Н.П. Плотникова, В.Г. Ефремов, Л.Н. Ефремова, Э.П. Васильева, В.Э. Васильева, Г.Л. Васильев – килеҫҫӗ. 1987 ҫулта шкул директорӗн тивӗҫӗсене Г.Л. Васильев пурнӑҫлама тытӑнать. Тепӗр 2 ҫултан шкул краеведени ӗҫӗсен центрӗ пулса тӑрать. Ҫавна май пур класра та пулас музей валли материалсем пухакан шырав ушкӑнӗсене йӗркелеҫҫӗ. Музея Аслӑ Ҫӗнтерӗве 45 ҫул ҫитнине халалласа савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура уҫаҫҫӗ.

90-мӗш ҫулсенче вӗрентӳ учрежденийӗ ҫӗнӗ кадрсемпе пуянланать, В.Н. Димитриев. Л.А. Масленникова, И.Б. Васильева ҫамрӑк специалистсем ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Ачасем пур енлӗн те аталанни пӗлтерӗшлӗ – театр, ташӑ тата хор кружокӗсенче хӑйсен пултарулӑхне туптакансем кашни ҫулах район шайӗнчи смотр-конкурссенче малти вырӑнсене ҫӗнсе илеҫҫӗ. Вӗрентекенсемпе вӗренекенсен пултарулӑх коллективӗсем час-часах халӑх умне концертсемпе тухаҫҫӗ. Класс тулашӗнчи мероприятисене ирттерес тӗлӗшпе М.В. Васильева аслӑ вожатӑй тӑрӑшулӑх кӑтартса ӗҫлет. Ҫав вӑхӑтрах шкул – ялӑн спорт пурнӑҫӗн центрӗ те. Кунта физкультура учителӗн В.Н. Димитриевӑн тӳпи ҫав тери пысӑк.



Ӗнерхи Янӑш шкулӗ, 2014 ҫ

«Прогресс» колхозӑн ун чухнехи председателӗн М.В. Игнатьевӑн тӑрӑшулӑхӗпе 1988 ҫулта 50 ача вырнаҫма пултаракан столовӑй хута каять. Вӗренекенсен йышӗ ӳссе пынӑран шкул ҫуртне пысӑклатас ыйту тухса тӑрать, 1992 ҫулта 264 ача вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ шкулӑн проектпа смета документацине хатӗрлеҫҫӗ. Анчах ҫӗршывра укҫа-тенкӗ енчен йывӑртарах пулнӑран ҫӗнӗ ҫурта хӑпартас ӗҫе пуҫарма май килмест.

2003 ҫулхи декабрь уйӑхӗнчен тытӑнса шкул директорӗнче В.Н. Димитриев вӑй хума тытӑнать, ҫав вӑхӑтра газпа ӗҫлекен котельнӑй хута каять, шкул тавра тимӗр карта тытаҫҫӗ. 2007 ҫулта Янӑш шкулӗ 100 ҫулхи юбилейне паллӑ тӑвать.

> Икӗ хутлӑ кирпӗч ҫуртра таса, хӑтлӑ классем, акт, сӗтел ҫи теннисла вылямалли, тренажер, кӗрешӳ залӗсем, икӗ бассейн

2015 ҫулхи августӑн 29-мӗшӗ янӑшсемпе таврари ялсенче пурӑнакансемшӗн пӗлтерӗшлӗ пулӑмпа асра юлчӗ – ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ умӗн кунта 165 ача йышӑнма пултаракан ҫӗнӗ, хӑтлӑ та капмар шкул ҫурчӗ хута кайрӗ. Ун ҫумӗнчех – шкулчченхи 40 ачана йышӑнма пултаракан ушкӑн та.

Икӗ хутлӑ кирпӗч ҫуртра таса, хӑтлӑ классем, акт, сӗтел ҫи теннисла вылямалли, тренажер, кӗрешӳ залӗсем, икӗ бассейн. Урамра физкультура урокӗсем ирттерме меллӗ. Стадион, йӗлтӗр трасси, баскетбол тата хоккей площадкисем ачасен сывлӑхне тата спортри пултарулӑхне аталантарма май параҫҫӗ. Шкулчченхи ушкӑна ҫӳрекенсем валли вӑйӑ площадкисем, ҫумӑртан пытанмалли вырӑнсем пурри те пӗлтерӗшлӗ.

Шкул ачисем тӗрлӗ предметпа пӗлӳ илнисӗр пуҫне кружоксемпе секцисенче хӑйсен пултарулӑхне аталантараҫҫӗ. Районти Ача-пӑча пултарулӑх центрӗн педагогӗсем ачасене ташлас ӑсталӑха алла илме пулӑшаҫҫӗ, краеведени занятийӗсем ирттереҫҫӗ. Спортпа туслисене валли ишес енӗпе тата ҫӑмӑл атлетикӑпа секцисем ӗҫлеҫҫӗ. Янӑш шкулӗнче вӗренекенсем район тата республика шайӗнчи ӑмӑртусенче пӗрре мар ҫӗнтерӳҫӗ ятне тивӗҫрӗҫ.

Шкулта бассейнсенче ачасем мӗн пӗчӗкрен шывра ишме хӑнӑхаҫҫӗ. Ҫывӑхри шкулсенче вӗренекенсем те палӑртнӑ графикпе килӗшӳллӗн ишес ӑсталӑха аталантараҫҫӗ кунта Ахаль ҫынсен те кунта хӑйсен сывлӑхне ҫирӗплетме май пур – бассейнӑн та, спортзалӑн та алӑкӗсем уҫӑ, ӳркенменнисем каҫсерен кӗлеткеҫурӑма пиҫӗхтереҫҫӗ.

2015 ҫултанпа шкул директорӗнче В.Г. Ефремов тимлет. Кунта пултаруллӑ, хӑйсен ӗҫне чун-чӗререн парӑннӑ учительсем вӑй хураҫҫӗ. Вӗренекенсем те маттур, спортра та, вӗренӳре те, пултарулӑх конкурсӗсенче лайӑх кӑтартусемпе палӑраҫҫӗ, шкул ятне ҫӳлте тытаҫҫӗ.

Ӗмӗр те теҫетке ҫул историллӗ шкул миҫе ачана вӗрентсе кӑларса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑратман пуль! Кунта ачасене пур енлӗн те аталантаракан, ҫӗнӗ пӗлӳ алла илме пулӑшакан, воспитани паракан тивӗҫлӗ вӗрентӳ тытӑмӗ йӗркеленнӗ.

**АННА ФИЛИППОВА**

▶ ÇУЛСЕРЕН ÇАК СИЕНЛĔ ЙĂЛА 7 МЛН ЯХĂН ÇЫН ПУРНĂÇНЕ ТАТАТЬ.

# Тантăшсем аса илеççĕ

• ТĔЛ ПУЛУ

**Германи çĕрĕ çинчи Совет çарĕсен ушкăнĕнче çар тивĕçне пурнăçланă (ГСВГ) ветерансен тĕл пулăвĕ иртрĕ.**



С. Петров (сулахайри) тантăшĕсемпе

Хастар ветерансенчен пĕри – Сильвестр Петрович Петров 1952 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Котеркасси ялĕнче çуралнă. Толик Хураски шкулĕнчен вĕренсе тухсан водитель профессине алла илнĕ. 1971-1973 çулсенче Германире ГАЗ-63 çар машинин водителĕ пулса çар тивĕçне пурнăçланă. Çартан таврăнсан Çĕнĕ Шупашкарта вăй хунă. Халĕ те тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те машина рульне алран ямасть, ĕçлет. Мăшăрĕпе иккĕшĕ хĕрпе ывăл пăхса çитĕнтернĕ, икĕ мăнукĕпе савăнаççĕ.

Тĕл пулăва тĕрлĕ районти 30 ытла ветеран хутшăнчĕ, вĕсен йышĕнче ентешсем те – Ишлейри Николай Мурзаков, Çырмапуçĕнчи Иван Александров тата Кӳкеçри Александр Николаев. «Виçĕ çул ветерансен ретĕнче тăратăп. Кăçал июнь уйăхĕнче Чăваш Енрен 8-ăн Саратов хулинче Германири Совет çарĕсен ушкăнĕнче çар тивĕçне пурнăçланă салтаксене асăнса лартнă стелăна уçнă çĕре хутшăнтăмăр. Унта Казахстан Республикинчи ГСВГ ветеранĕсем те йышлăнччĕ. Сызраньти авточупăва вара Тюменьрен те килчĕç», – хавхаланса каласа кăтартрĕ Сильвестр Петрович.

Ветерансен туслăхĕ çулсем иртнĕçемĕн çирĕпленсе пырать. Пĕр çĕршывра çар тивĕçне пурнăçланă ĕнерхи салтаксемшĕн кашни тĕл пулу ĕмĕрлĕхех асра юлать.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АТĂЛЪЯЛ**

● ЙĂНĂШ ÇУЛПА

## Сӳнтер те урăх ан тиверт

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче эпир пирус туртассине сивлемелли пĕтĕм тĕнчери куна паллă тăватпăр. Çулсерен çак сиенлĕ йăла 7 млн яхăн çын пурнăçне татать. Енчен те ăна хирĕç тăма хал çитерейменсен 2030 çул тĕлне çак кăтарту çулталăкра 8 миллиона çитесси пирки калаçаççĕ – асăрхаттараççĕ республикăри Гигиенăпа эпидемиологи центрĕнче. Табакри никотин хĕрарăмсене те, арçынсене те пĕр пек шелсĕр витĕм кӳрет. Чĕрен ишеми чирне, пуç мимин юн тымарĕсенне, сывлав органĕсен ракне шăпах çак наркăмăш пуçарнине ученăйсем тахçанах ĕнентернĕ. Çирĕпленсе çитмен çамрăк организмшăн вара вăл пушшех хăрушă наркăмăш. Никотин этемлĕхе кӳрекен сăтăра вĕçсе пур сывлăх сыхлав учрежденийĕ те çак кун пирус туртассине сивлеме сĕнет. ■

● ПРОКУРАТУРА ПĔЛТЕРЕТ

Карачурара пурăнакан 46 çулти арçынна Шупашкар район территорийĕнче законлă мар майпа азартлă вăййсем йĕркеленĕшĕн тата ирттернĕшĕн (РФ УК 171.2 статья, 2-мĕш пай, «б» пункт) пĕр çулталăклăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Çакăн пек йышăну кăларнă Шупашкар район сучĕ.

Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче преступник Кӳкеçри пĕр çурта тара тытса граждансене илĕртсе вылямалли аппаратсем вырнаçтарнă, законсăр выляв ĕçĕхĕлне йĕркеленĕ. «Пĕр алăллă бандитсенчен» 2016 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи август 25-мĕшĕччен илнĕ тупăш 3850270 тенкĕпе танлашать.

Полици сотрудникĕсем 31 компьютер оборудованийĕ туртса илнĕ. Арçын хăйĕн айăпне йышăннă. Юсав учрежденийĕнче пĕр çуллăха ларма тивнипе пĕрлех унăн 100 пин тенкĕ штраф та тӳлемелле. ■

## УСАЛ ХЫПАР

**«ВĂРĂ ВĂРĂМ, КУÇĔ ЧАРМАК, ПИЛĔКĔ ÇИНÇЕ»,** – тет ваттисен каларăшĕ. Чăн та, ют çын пурлăхне куç хывакансем усал шухăшне пурнăça кĕртме темле майпа та чееленме хăтланаççĕ. Кӳкеçри пĕр лавккари сентре айĕнчи шкапран вăрă сутуçă айккине пăрăннă самантра 6500 тенкĕ вăрласа тухнă. Сăтăрçă тĕлĕшĕпе РФ УК 158-мĕш статйипе (1-мĕш пай) ĕç пуçарма, ăна икĕ çул таран ирĕкрен хăтарма пултараççĕ.

**ÇĔНĔ ТУТАРКАССИНЧИ** пĕр çуртран вара вăрăхурах пӳрт тăррине витмелли 30 рулон стройматериал çаратса тухнă. Çапла майпа Шупашкарти пĕр строительство организацине 30 пин тенкĕлĕх сиен кӳни паллă.

**ЛАПСАР ЯЛ ТĂРĂХĔНЧИ** 19 çулти каччăна вара аслисене хисеплеме вĕрентмен пулмалла. Асламăшĕ çине алă çĕклеме именмен. Вăл вată хĕрарăма вăйпа тĕксе янă, çакăн хыççăн хулпуççинчен тытса урайне ӳкернĕ, лешĕ вара çурăмĕпе çапăннă. Тепĕр кун ӳкĕнес вырăнне вată çын ăна хирĕç тăрайманнипе усă курса кĕлеткинчен çапнă. Унччен ют çын пурлăхне вăрланăшăн айăпланнă каччă тĕлĕшĕпе РФ УК 116.1 статйипе ĕç пуçарнă, ăна 40 пин тенкĕ таран штраф тӳлеттерме е виçĕ уйăх таран арестлеме пултараççĕ.

**ШУПАШКАР РАЙОН СУЧĔ** Типçырмари 51 çулти арçын тĕлĕшĕпе терроризмла акт çинчен суя пĕлтерӳ тунăшăн РФ УК 207-мĕш статйипе (1-мĕш пай) килĕшӳллĕн приговор вуланă. Арçыннăн хăйĕн ăссăр ĕç-пуçĕшĕн 1 çул та 2 уйăх тӳрленмелли ĕçре тăрăшмалла пулать, унăн ĕç укçин 15%-не патшалăх хыснине тытса юлĕç. ■

⮠2

# Çулĕ такăр пултăр

• КУН ЙĔРКИНЧЕ

Сергей Алексеевич райадминистрацин хула строительствин тата архитектура уйрăмĕн сотрудникĕсем ял тăрăх пуçлăхĕсемпе пĕрле район тата ял тăрăх балансĕнче тăракан çулсен усă курас пахалăхне вырăна тухса тĕрĕсленĕ, объектсен списокне йĕркеленĕ. Анализ хыççăн объектсен списокĕ тата ĕç планĕ хатĕр.

Райадминистрацин хула строительствин тата архитектура уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ Надежда Грацилева «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» федераци программи 2017 çултан пуçласа 2025 çулччен пурнăçланассине, унта Чăваш Республики те хутшăннине пĕлтерчĕ. Шупашкар районĕ Шупашкар хула агломерацине кĕнине те ăнлантарчĕ вăл. 2017-2018 çулсенче çул-йĕре юсамалла, 2019-2025 çулсенче çулсен реконструкцийĕ тата строительстви иртĕ. 2017 çулта уйăрнă 97 млн тенкĕрен Шупашкар районĕнче 89 млн тенке ĕçе янă, 22,3 км тăршшĕ çула юсанă. Çитес çулта республика тата район бюджечĕсенчен 250 млн тенкĕ уйăрма планланă, çакă 60 км яхăн çул-йĕре юсаса çĕнетме май парĕ.

Усă итлевре ял тăрăх пуçлăхĕсем тата ял-салара пурăнакансем хăйсен проекчĕсемпе паллаштарчĕç. Юсамалли çулăн карттине тата вăл юрăхсăра тухнине çирĕплетекен сăн ӳкерчĕксем те тăратрĕç.

2018 çулта Апаш ял тăрăхĕнчи 0,5 км тăршшĕ «Атăл-Паçпак-Эсеккасси» çула юсама планланă, çавăн пекех Апашри Школьная тата Садовая урамсенчи 1,03 км тăршшĕ çула та. Шĕнерпуç, Шемшер тата Тутаркасси ял тăрăхĕсем урлă иртекен «Типнер-Чулкасси-Почтовая урам» çулăн 6,78 км те юсав кĕтет. Çак çулпа 117-мĕш маршрутлă автобус çӳрет, унпа «Атлашевская» чăх-чĕп фабрики таран çитме, унтан Шемшер салине анма пулать. Тутаркасси ял тăрăхĕнче «Урай Макаç-Анатри Макаç» çулăн 1,7 км-не юсама ыйтаççĕ, Атайкасси ял тăрăхĕнче – «Шупашкар-Сăр-Йăршу» çулăн 2,4 км, Явăш ялĕнче – Ленин урамĕнчи 0,95 км çула, Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнче – «М7-Шарпаш» çулăн 4 км, «Атăл-Çӳлтикасси-Олгаш» çулăн 3,2 км, Ишек ял тăрăхĕнче – «Шупашкар-Сăр-Ишек-Малтикасси» çулăн 2,2 км, Ишлей ял тăрăхĕнче – «Шупашкар-Сăр»-Ишлей-Курак Чурачăк çулăн 5,7 км, Курак Чурачăк ялĕнчи Школьная урамри 1,715 км çула, çавăн пекех «Шупашкар-Сăр»-Ишлей-Курак Чурачăк автоçул çинче (Вуçпӳрт Чурачăка кĕнĕ çĕре) 0,4 км тăршшĕ хӳме лартмалла; Кăшавăш ял тăрăхĕнче – Кăрмăш-Мăнал-Тимĕрçырма çулăн 2,7 км тата 1,5 км тăршшĕ хӳме (Кăрмăш ялĕ таран участока), Кăрмăшри Молодежня урамри 0,75 км çула; Кӳкеç ял тăрăхĕнче – «Кӳкеç-Иккасси-Платка (К. Маркс урамĕ) çулăн 1,610 км, Школьная урамра 0,4 км çула; Лапсар ял тăрăхĕнче – «Атăл-Ойкасси-Çĕнъял» çулăн 2,5 км тата 0,4 км тăршшĕ хӳме лартмалла, Хĕрлĕçырта (Советская, 9 мая, Лесная урамсем) 2,09 км тăршшĕ çул-йĕре; Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕнче – Мăн Кивпулăх-Ишлей станцийĕ-Мишер çулăн (Янту выççăлкки ялĕ патне пыракан çул) 1,7 км тăршшĕне; Çĕньял ял тăрăхĕнче – Çĕньял-Илпеш çулăн 1,1 км участокĕнче 0,7 км тăршшĕ хӳме лартмалла; Çырмапуç ял тăрăхĕнче – Карантай ялĕнчи Молодежная урамри 0,5 км тăршшĕ çула; Чăрăшкасси ял тăрăхĕнче – «Чăрăшкасси-Тойтерек-Хырăшкасси-Ишлейкасси-Шуркасси» («Хырăшкасси-Ишлейкасси-Шуркасси» участокĕ) 3,4 км çула; Шĕнерпуç ял тăрăхĕнче – Шĕнерпуçри Кооперативная урамри 1,7 км çула: Янăш ял тăрăхĕнче – Турикасси-Мăн Мамăш-Чакан çулăн 0,5 км участокне, «Турикасси-Мăн Мамăш-Чаканар»-Тимой Мамăш (çак ял патне кĕмелли çул) çулăн 1,8 км юсамалла.

Юсама планланă çулсен проекчĕсене халăх умĕнчи итлевсене хутшăнакансем пурте ырларĕç. Сĕнӳсем тата асăрхаттарусене шута илсе тӳрлетӳсем кĕртрĕç. Çавăн пекех ял тăрăх пуçлăхĕсем укçа-тенкĕ юлсан аукцион ирттернĕ хыççăн юсамалли хушма участоксене палăртраççĕ.

**АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

ОФИЦИАЛЬНО

**Публичная оферта (договор) на оказании услуг по подаче воды (водоснабжению) частного сектора Ишлейского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики.**

с. Ишлеи Ишлейское сельское поселение Чебоксарского района

**1. Общее положение.**

1.1. В соответствии со ст.437 Гражданского кодекса Российской Федерации данный документ (предложение) является официальным публичным и безотзывным предложением (публичной офертой) о предоставлении услуг по подаче воды (водоснабжению) населению частного сектора, проживающие на территории муниципального образования Ишлейского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики для заключении договора на оказании услуг по подаче воды (водоснабжению) частного сектора Ишлейского сельского поселения, далее «Клиент» с одной стороны, с Муниципальным унитарным предприятием «Жилищно-коммунальное хозяйство «Ишлейское», в лице директора Лукина Сергея Николаевича, действующего на основании Устава, именуемое в дальнейшем «Исполнитель», с другой стороны, на основании "Правил предоставления коммунальных услуг собственникам и пользователям помещений в многоквартирных домах и жилых домов", утвержденных постановлением Правительства РФ от 06.05.2011 N 354 (далее - Правила).

1.2. Акцепт оферты означает, что Клиент согласен со всеми положениями настоящего предложения и равносилен заключению договора на оказание услуг по подаче воды (водоснабжению).

1.3. Данная оферта вступает в силу с момента размещения в газете «Тăван Ен» или другими способами оповещения и действует до момента отзыва оферты Исполнителем.

**2. Предмет договора.**

